24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ФЕВРАЛЬ
10
ЫТЛАРИКУН
34 (6059) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔПЕ ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă пĕрремĕш пехотнăй училищĕне тата понтонсемпе кĕперсем тăвакан 41-мĕш уйрăм батальона Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан кĕрешÿ фронтĕнче Командованин боевой заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çак ĕçре хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн çаксене **ХĔРЛĔ ЯЛАВ** орденĕпе наградăлас:

Ленинградри С. М. Киров ячĕпе тăракан Хĕрлĕ Ялавлă пĕрремĕш пехотнăй училищĕне.

Понтонсемпе кĕперсем тăвакан 41-мĕш уйрăм батальона.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Наркомнефтĕн Бакури лейтенант Шмидт ячĕпе тăракан заводне Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Çĕнĕ йышши боеприпассем тумалли плана кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата оборона тĕлĕшпе панă заказсене планран ирттерсе туса кăларнăшăн Наркомнефтĕн Бакури лейтенант Шмидт ячĕпе тăракан заводне **Ленин** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Бакури нефтьрен ытти продуктсем туса кăларакан, Сталин ячĕпе тăракан завода Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Оборонăна кирлĕ нефтепродуктсем туса кăларассине ÿстерес тĕлĕшпе правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Бакури нефтьрен ытти продуктсем туса кăларакан, Сталин ячĕпе тăракан завода **Ленин** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Бакури „Лениннефть" трестăн 11-мĕш №-лĕ промыслине Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Нефть кăларас тĕлĕшпе правительство панă задание кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Бакури «Лениннефть» трестăн 11-мĕш №-лĕ промыслине **Ленин** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Бакури нефть кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен „Сталиннефть" трестăн 4-мĕш №-лĕ промыслине Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Нефть кăларас тĕлĕшпе правительство панă задание кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Бакури нефть кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен «Сталиннефть» трестăн 4-мĕш №-лĕ промыслине **Ленин** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Грозныйри „Малгобекнефть" трестăн 2-мĕш №-лĕ промыслине Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

Нефть кăларас тĕлĕшпе правительство панă задание кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Грозныйри «Малгобекнефть» трестăн 2-мĕш №-лĕ промыслине **Ленин** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Грозныйри нефтьрен ытти продуктсем туса кăларакан 2-мĕш №-лĕ завода Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Оборонăна кирлĕ нефтепродуктсем туса кăлармалли плана кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн тата çĕнĕ меслетсем кĕртес тĕлĕшпе пусарулăх кăтартнăшăн Грозныйри нефтьрен ытти продуктсем туса кăларакан 2-мĕш №-лĕ завода **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Бакури „Молотовнефть" трестăн 4-мĕш №-лĕ промыслине Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Нефть кăларас тĕлĕшпе правительство панă задание кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Бакури «Молотовнефть» трестăн 4-мĕш №-лĕ промыслине **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 6-мĕш.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Сталинградри Ленин орденлĕ трактор заводне Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе наградăласси çинчен

Танксем тата танк моторĕсем туса кăларас тĕлĕшпе правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Сталинградри Ленин орденлĕ трактор заводне **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав** орденĕпе наградăлас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти февралĕн 8-мĕш.

Совет Союзĕпе Канада пĕр-пĕрин патĕнче консулсем тытма килĕшни

Юлашки вăхăтра СССР тата Канада правительствисем хушшинче калаçусем пулса иртнĕ. Çав калаçусем хыççăн февралĕн 5-мĕшĕнче Лондонра килĕшÿ туса алă пуснă. Çав килĕшÿ тăрăх Совет Союзĕпе Канада пĕр-пĕрин хушшинче консулла çыхăнусем тытса тăма пулĕççĕ тата вĕсен пĕр-пĕрин патĕнче консульство представителĕсем пулмалла. Килĕшÿ çине Совет правительстви полномочи панипе—ССР Союзĕн Англири посолĕ Майский юлташ, Канада правительстви полномочи панипе—Канадăн Англири верховнăй уполномоченнăйĕ господин Мэссей алă пуснă. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 7-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Февралĕн 7-мĕшĕнче пирĕн войскăсем наступлени туса пырса халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен фашистла войскисем уйрăм участоксенче контратакăсем тунă, анчах та вĕсене сирсе пăрахнă.

Февралĕн 6-мĕшĕнче нимĕçсенне 21 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

Февралĕн 5-мĕшĕнче нимĕçсенне малтан кăтартнă пек 34 самолет мар, 46 самолет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Февралĕн 6-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 270 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 226 лавне, 11 орудине прислугисемпе пĕрлех, зенитнăй пулеметсен 10 точкине пĕтерсе тăкнă тата сиенленĕ, горючисен складне взрыв туса сирпĕнтернĕ, противник пехотине пĕр полка çити сапаласа янă, пĕр пайне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Пирĕн стрелковăй часть (Хĕвеланăç фрончĕ), противник вăйлăн çирĕплетнĕ пункт çине наступлени туса, тăшманăнне икĕ танк, икĕ танкетка, темиçе автомашина пĕтерсе тăкнă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем нумай пĕтнĕ. Тепĕр участокра пирĕн гвардейски чаçсем Х. ялне йышăнса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсем 270 çын вилсе юлнă.

* * *

Кăнтăр-Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче Шейко юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн боецсем çапăçу хыççăн халăх пурăнакан Ш. пункта йышăнса илнĕ. Гитлеровецсем çав пункта тепĕр хут йышăнса илес тесе контратака тунă. Анчах та çав контратакăна тăшмана пысăк çухатусем тÿсе, тăшмана сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 200 вилли, хĕçпăшалсемпе боеприпассем нумай вырса юлнă.

* * *

Оруди командирĕ Малышев тата наводчик Стрельников юлташсем противникăн огневой точкисене сăнаса тăнă чухне тăшманăн виçĕ ДЗОТ-не асăрханă. Совет артиллеристĕсем хăйсен орудине уçă позицие илсе тухнă та тĕл персе ДЗОТ-сене аркатнă, çав ДЗОТ-сенче пулнă нимĕç салтакĕсене вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Кĕçĕн командир Жолубăн пулеметнăй отделенийĕ тĕл персе пехотнăй чаçăн наступленине пулăшса пынă. Виçĕ хут аманнă Жолуб юлташ малалла пырса огневой позицие пилĕк хут улăштарнă, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 20 çынна ытла пĕтерсе тăкнă.

* * *

Крымри партизансен отрядĕнчи разведчик Р. юлташ каçхине разведка тунă вăхăтра нимĕçсен часовойне чиксе вĕлернĕ. Фашистсен икĕ салтакне-связистĕсене тата румын салтакне-посыльнăйне персе вĕлернĕ. Хăюллă партизан хăй пĕтерсе тăкнă тăшмансен хĕçпăшалĕсене хăйĕн базине илсе пынă.

* * *

Нимĕçсен 29-мĕш пехотнăй полкĕнчи 7-мĕш рота командирĕн Ф. Бредберг лейтенантăн дневникĕнчи хăшпĕр вырăнсене илсе пичетлетпĕр. Гитлер офицерĕ çырса пынисем нимĕç войскисем малтанах шутласа хунă план тăрăх оборонăн хĕллехи линийĕсем çине чакни çинчен Германи военщини суйса элекленисене питлеççĕ.

«Наро-Фоминск. Декабрĕн 5-мĕш. Мĕн чухлĕ тÿсе ирттертĕмĕр эпир çак вăхăтра. Эпир инçетречĕ, декабрĕн 3-мĕшĕнче вара каллех хамăрăн малтанхи позицисем çине таврăнтăмăр. Генеральнăй наступлени путланса ларчĕ. Нумай юлташсем пĕтрĕç. 9-мĕш ротăра икĕ офицер, 4 унтер-офицер тата 16 салтак кăна юлнă. Ытти ротăсенче те унтан ытла мар. Декабрĕн 1-мĕшĕнче манăн ротăн 9-мĕш рота патне пырса 1-мĕш батальонăн сылтăм хĕрринчи çыхăнăвне ĕçе ямалла пулнă. Пур енчен те пирĕн çине вырăссем персе тăчĕç. Эпир юлташсен виллисем çумĕпе иртсе кайрăмăр. Пĕр вырăнта, пĕр пĕчĕк вырăнтах, пирĕн 25 салтакăн виллисем купаланса выртаççĕ. Çакă вăл вырăссен пĕр снайперĕн ĕçĕ... Каçхине пирĕн чаçсене каялла сирсе ывăтни паллă пулчĕ. Рота хыççăн рота хăйсен позицийĕсене пăрахса хăварчĕç. Уйăх çуттинче ротăсен юлашкийĕсем хăйсен юлташĕсен виллисене çĕклесе каялла иртни курăнатчĕ... Анлă наступлени тума шутлани пĕтсе ларчĕ.

Ильино. Декабрĕн 11-мĕш. Тул çутăлса килнĕ чух çурçĕр енне... кусасси çинчен приказ илтĕмĕр. Чарăн! Халь кăна, пирĕн чаçсене каялла сирсе ывăтни çинчен калакан телефонограмма илнĕ... Малалла приказ пуласса кĕтсе пирĕн кунтах юлмалла. Мĕн илсе килĕ-ши пуласлăх пире валли?

Богаево. Декабрĕн 15-мĕш. Лызлово патĕнче позицисем йышăнтăмăр. Кунта вырăссем пирĕн оборона линине татса кĕрсе пирĕннисене хĕснĕ. Пĕрремĕш батальон кăштах кусна; анчах та Исаковăран 5 километрта ăна чарнă. Манăн ротăна пулăшма ячĕç, 15 сехетре ман ротăн ял çине наступлени пуçласа ямаллаччĕ. 1-мĕш батальон çав вăхăтра 100 çынна яхăн çухатнă. 14 сехет çитес чух вырăссем çĕнĕрен наступлени пуçласа ячĕç, пире каллех виçĕ енчен хăварса илнĕ. Эпир каялла чакрăмăр. Çитес кунсенче мĕн пуласси никам та пĕлмест. Вырăссене ăçта та пулсан тытса чармаллах, ахалĕн 29-мĕш пехотнăй полк тĕп пулать».

* * *

Нимĕçсен арканса кайнă 34-мĕш сапернăй батальон штабĕн хучĕсем хушшинче нимĕç командованийĕн приказне тупнă. Унта çапла каланă: «Данире туса хатĕрленĕ аш-какай консерви ăшĕнче пĕр войсковой часть пĕр-икĕ сантиметр тăршшĕ тата 0,23 милиметр хулăмĕш металл татăкĕсем тупнă. Ку саботаж пулас. Çав консерва коробкисен хупăлчисем çинче, коронăсăр пуçне, «Дания—210» тесе çырни пур. Çав производство консервисем ытти чаçсемпе подразделенисенче те пулма пултарĕççĕ. Интендантсен çав консервăсем çине ытларах пăхмалла».

* * *

Февралĕн 2-мĕшĕнче Чехословакири Клатови хулинчи нимĕç влаçĕсем 13 çултан пуçласа 16 çула çитиччченхи 450 школьника Германине янă. Çав ачасене хăйсен килĕсене кĕрсе ярăласем илсе тухма та май паман. Çул çинче пур вагонсен алăкĕсене те питĕрсе лартнă. Шывсăр тата çăкăрсăр антăраса чылай школьниксем чирленĕ. Вĕсенчен тăватăшĕ вилнĕ. Çакă паллă: çак вăйĕ çитмен пирки гитлеровецсем Германири предприятисенче ĕçлеме оккупациленĕ çĕршывсенчи ачасене [illegible] пуçтарса каяççĕ.

* * *

Куйбышев хулинчи [illegible] пĕринче производствăра 40 мĕш çул ĕçлекен кадровăй рабочисем Батрак, Сиротин, Шушкат тата Кагановский юлташсем сменăри заданине кашни кунах 300—400 процент тултараççĕ.

Февралĕн 8-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Февралĕн 8-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç активлă çапăçусем туса пынă.

* * *

Хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн часть противникăн çирĕплетнĕ пункчĕ çине çĕрле кĕтмен çĕртен пырса тапăннă. Нимĕçсем хăйсен салтакĕсен 200 виллине пăрахса хăварса, паникăна ÿксех тарнă. Пирĕн боецсем боеприпассен пысăк складне тата хĕçпăшал нумай тытса илнĕ. Тепĕр участокра Эрастов юлташ командир пулса ертсе пыракан часть нимĕçсен контратакине сирсе пăрахса, тăшман пехотин батальонне аркатса тăкнă.

* * *

Поздняков юлташ командир пулса ертсе пыракан пирĕн часть (Калинин фрончĕ) пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан виçĕ пункта йышăнса илнĕ тата 18 оруди, темиçе миномет, çар пурлăхĕсем тиенĕ пысăк обоза тытса илнĕ. Гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 220 çын вилнĕ.

* * *

Пирĕн чаçсенчен пĕринчи автоматчиксем (Калинин фрончĕ) противникăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕç пехотин батальонĕ çине тапăннă. Çапăçу хирĕнче противникăн салтакĕсемпе офицерĕсен 124 вилли выртса юлнă. 57 нимĕçе тыткăна илнĕ, 4 противотанковăй оруди, 4 миномет, 11 пулемет, полевой госпитале унта ĕçлекенсемпе пĕрлех тытса илнĕ.

Ленинград фрончĕн уйрăм участокĕсенче кĕрешекен пирĕн чаçсем пĕр кун хушшинчи çапăçусенче противникăнне çĕрпе йывăçран тунă 7 огневой точкине çĕмĕрсе тăкнă, 4 пулеметне тата наблюдательнăй пунктне пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсем 400 çынна çити вилнĕ.

* * *

Пирĕн 7 разведчик, Есанов сержант ертсе пынипе, противник оборона тума çирĕплетнĕ Н. ялне пырса кĕнĕ. Хăюллă разведчиксем хăвăрт пырса çапса СС-овецсен отрядне сирсе пăрахнă. Нимĕçсем паникăна ÿксе тарса пĕтнĕ. Пирĕн разведчиксем пĕр оруди, 3 пулемет, 30 винтовка тата 400 патрон тытса илнĕ.

* * *

Полтавщинăри И. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансен отрядĕ К. станци çывăхĕнче чугунçул çине минăсем хурса тухнă. Взрыв пулнипе нимĕçсен çар эшелонĕ катастрофа тÿснĕ. Вагонсен ванчăкĕсен айне пулса нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсем нумай пĕтнĕ.

* * *

Пирĕн чаçсем нимĕçсен танковăй войскисен 3-мĕш группин командованийĕн приказне тытса илнĕ. Çав приказра советăн оккупациленĕ районĕсенчи мирлĕ халăха ирĕксĕрлесе тĕрлĕ йывăр ĕçсем ĕçлеттересси çинчен каланă. Çав ĕçсене ним тÿлемесĕрех ĕçлеттермеллине приказра паллă тунă. Малалла çапла каланă: «Тÿлевсĕр ĕçленипе халăх саботажла актсем тунишĕн тата малалла пулма пултаракан саботажсен айăпне тавăрать», тенĕ. Нимĕç военщинин çак усал та тискер докуменчĕ Гитлер çынçиенĕсен тискер сăн-питне татах тепĕр хут кăтартса парать.

* * *

Январĕн 20-мĕшĕнче Охват районĕнче нимĕçсен 81-мĕш пехотнăй дивизин 189-мĕш полкĕнчи 1-мĕш батальонăн командирĕ капитан Альфред Линденталь, лейтенант Гельмут Грюндер тата çав полкри 9 салтак пирĕн боецсене тыткăна парăннă.

Тыткăна парăннисем декабрĕн 24-мĕшĕнчен дивизи Францире пулни çинчен, январь уйăхĕн пуçламĕшĕнче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта çитни çинчен каласа панă. Январĕн 10-мĕшĕнче полк вырăссене Пено хулинчен хăваласа кăларма приказ илнĕ, анчах та çапăçура полка çапса салатнă, тепĕр виçĕ кунтан тĕппипех аркатса тăкнă. Полк командирĕ полковник Гохмейр вилнĕ. Салтаксен ушкăнĕ капитан ертсе пынипе 5 талăк хушши ним апатсăр вăрмансем тăрăх çапкаланса çÿренĕ. Тыткăна парăннă лейтенант Грюндер каланă тăрăх, группăра малтан 50 çын пулнă. Анчах та вĕсенчен хăшпĕрисем сурансемпе начарланса çитсе тата сивĕпе вилнĕ. Тыткăна парăннă капитан Линденталь çапла каласа панă: «Пеноран чакнă «СС» батальонĕн юлашкийĕсем пур салтаксене те йывăр шухăша ячĕç. Нимĕçсен çар чаçĕсавăн пек паникăна ÿксех тарасса пирĕнтен никам та тавçăрса илме пултарайман. Анчах та тепĕр икĕ кунтан пирĕн те çавăн пекех тармалла пулчĕ».

* * *

Смоленск облаçĕнчи Бильдюгино ялĕн çыннисем А. Д. Григорьева, М. Б. Гуськина, И. Г. Семенова, А. М. Сергеева, Д. С. Садовникова, старший политрук Е. М. Режило тата лейтенант В. Т. Степанов нимĕç бандичĕсен этемле мар тискер ĕçĕ çинчен акт çырнă. Актра çакна кăтартнă: пирĕн войскăсем пырса çапнипе Бильдюгино ялĕнчен тухса тарнă чух нимĕçсем 12 çурта, шкула, колхоз çурчĕсене вут тивертсе хăварнă, халăхăн ăшă-пÿмтирĕсене, урана тăхăнмаллисене тата апат-çимĕçсене пĕтĕмпех пуçтарса илнĕ. Гитлеровецсем ялти 12 çынна мунчана хупнă та мунчине вут тивертсе янă. Вутра çаксем çунса кайнă. Н. С. Конкина — 75 çулта, Т. О. Гусева — 58 çулта, В. Т. Гусева — 17 çулта, И. Т. Гусева — 14 çулта, Д. К. Данилова — 80 çулта, С. Л. Конова — 68 çулта, С. С. Селиверстова — 15 çулта, П. В. Куськина — 50 çулта, В. С. Сергеева — 80 çулта, М. Е. Михайлова — 40 çулта, С. И. Романова — 50 çулта тата С. В. Степанов — 69 çулта.

* * *

Кафанри (Армения) горняк Арам Мартиросян кăмрăк кăларас ĕçре, сменăра 1.270 тонна кăмрăк кăларса, çĕнĕ рекорд тунă. Мартиросян юлташ пĕр кунхи нормăна 5.115 процент тултарнă.

Февралĕн 8-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Февралĕн 8-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противник хирĕç тănине тата контратакăсем тунине сире-сире пăрахса, малалла наступлени туса пынă, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ.

Февралĕн 7-мĕшĕнче нимĕçсенне 17 самолет пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 12 самолет пĕтнĕ.

* * *

Февралĕн 7-мĕшĕнче пирĕн авиацин чаçĕсем нимĕçсен 6 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 211 автомашинине, боеприпассем тиенĕ 225 лавне, 31 орудине, зенитнăй пулеметсен 9 точкине, минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă, сиенленĕ, противник пехотин 4 батальонне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Миронов юлташ командир пулса ертсе пыракан гвардеецсем (Хĕвеланăç фрончĕ) юлашки кунсенче халăх пурăнакан темиçе пункта йышăннă, нимĕçсенне 19 оруди, 43 грузовой тата 8 çăмăл автомашина, 11 миномет, 28 пулемет, 34 автомат, боеприпассемпе ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем нумай тытса илнĕ. Пĕр кун хушшинчи çапăçусенче кăна нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем 730 çын вилсе пĕтнĕ. Тепĕр участокра пирĕн стрелковăй часть тăшманăн орудине, 12 пулеметне тата 4 минометне тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче противник хăйĕн салтакĕсемпе офицерĕсен 150 виллине пăрахса хăварнă.

* * *

Калинин фрончĕн участокĕсенчен пĕринче пирĕн танкистсем, тăшманăн чаçĕсем вырнаçнă çĕре кĕтмен çĕртен пырса тапăнса, нимĕçсене 4 зенитнăй орудин, 4 миномет, 8 станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă тата 250 гитлеровеца персе вĕлернĕ.

* * *

Старший лейтенантăн Васюковăн подразделенийĕ, Б. ялне тавра çавăрăнса кĕрсе, унтан нимĕç автоматчикĕсене çапса кăларнă, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 80 çынна пĕтерсе тăкнă, виçĕ пулемет, миномет тата боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Красноармеец-разведчик Балашов боецсен группипе пĕрле противникăн тылне кĕрсе кайнă та нимĕçсен обозĕсем куçакан çул çинче засада тунă. Пĕр кун хушшинче çак хăюллă группа тăшманăн виçĕ лавне тата 10 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Красноармеец-снайпер Преснов юлашки çапăçусенчен пĕринче нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 17 çынна персе вĕлернĕ.

* * *

Пирĕн алла нимĕç эсэсовецĕсен кавалери бригадин командирĕн приказĕ лекнĕ. Приказра çапла каланă: «Тĕрĕслесе пăхса тухнă чухне, эпĕ, хĕçпăшала мĕнчухлĕ таса тытнине пĕлес тесе, бригадăри военнослужащисене хăйсен хĕçпăшалĕсене кăтартма хушрăм. Мĕнле пăшал кĕпçисем эпĕ куртăм! Çакă вăл инкек, катастрофа! Кĕпçи пĕтĕмпех тасамарлăхпа тулса ларнă пăшалран салтак мĕнле пеме пултартăр-ха? Çакăн пек пăшалпа усă курма пачах май çук... Юлашки эрне хушшинче салтаксен пĕр ушкăнне вĕсем хăйсен кĕпташĕсенех сăратнăшăн суда панă. Постран хăйсен ирĕкĕпе тухса кайнăшăн виçĕ салтака суда панă. Бригадăра çакăн пек ĕçсем хальхин пек час-часах тата йышлăн пулнине курман... Посылкăсене уçаççĕ, сехетсемпе ытти япаласене вăрлаççĕ. Шофер 12 бутылка алкоголлĕ япала вăрласа ĕçсе янă. Çакăн пек выльăхсене эпĕ варвăрла пĕтерсе пыратăп». Малалла приказра «суда лекекенсен шучĕ хăрушшăн ÿссе кайрĕ», тенĕ. Гитлер офицерĕн çак приказĕ нимĕç бандичĕсем шухăш-кăмăл тĕлĕшпе мĕнтери ирсĕрленсе кайнине кăтартса парать.

* * *

Нимĕçсен вилнĕ салтакĕ Иосиф Бискон çумĕнче вăл хăйĕн Венăра пурăнакан тăванĕсем патне яма ĕлкĕреймен çырăва тупнă. Унта çапла каланă: «Атте, эсĕ иртнĕ тĕнче вăрçи вăхăтĕнче ман пек чирлисене госпитале яратчĕç тесе çыратăн. Халĕ ун чухнехи мар. Халĕ кунта ман пек чирлисем кăна мар, манран та ытларах чирлисем пур, анчах га стройрах юлма тивет. Тăвăллă вăхăт килсе кĕчĕ, эпир каялла чакатпăр, пирĕнтен нумайăшĕсем пĕтеççĕ.. Ан хурланăр: эпĕ çĕр айне мĕн чухлĕ маларах лекетĕп, асап-инкек тÿсесси çавăн чухлĕ сахалрах пулĕ».

* * *

Сталино облаçĕнчи Красноармейск ялĕнче нимĕç бандичĕсем мирлĕ халăха тискеррĕн асаплантарнă. Ялти нумай çуртсене нимĕçсем вут тивертсе çунтарса янă. Гитлеровецсем ялта пурăнакансене пурне те ялти площаде хăваласа пухнă, унтан арçынсене çывăхри хулана хăваласа кайнă, хĕрарăмсемпе ачасене автоматсенчен пере-пере вĕлернĕ. Ял урамĕсем хĕрарăмсемпе ачасен виллисемпе витĕннĕ. Çакăнта пĕтĕмпе 100 çынна ытла вĕлернĕ.

* * *

Чехословакири Шкода заводĕсенче диверсисемпе саботаж тăвасси ÿссех пырать. Январь уйăхĕн вĕçĕнче Пельзенри заводсенчен пĕринче рабочисем забастовка туса ирттернĕ. Забастовка вăхăтĕнче пĕтĕмпех хăвăртлăха чакарса ĕçленĕ. Завод администрацийĕ штурмовиксен отрячĕсене чĕнсе илнĕ. Штурмовиксем хĕçпăшала ĕçе ярса 17 рабочие персе вĕлернĕ, нумай çынсене арестленĕ.

* * *

Финсен çартан тарнă салтакĕсен хĕçпăшаллă ушкăнĕ финн войскисен тылĕнче продовольстви турттарса пыракан пысăк обоз çине тапăннă. Тарканçем продуктсем тиенĕ темиçе лава туртса илнĕ.

* * *

Чита облаçĕнчи Шерловогорскри тăхлан кăларакан комбинатри горняксем ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Çамрăк забойщик Ксенефонтов сменăра 6 норма тултарнă, забойщик Гончаров задание 821 процент, забойщик Козлов — 890 процент тултарнă. Брусенцов юлташ нормăна 1.121 процент тултарса чаплă çитĕнÿ тунă.

Февралĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Февралĕн 9-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем, нимĕçсен фашистла войскисене хирĕç çапăçса, наступлени туса пынă.

* * *

Бобров юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем (Хĕвеланăç фрончĕ), тăшмана пыра-пыра çапса, февралĕн 7-мĕшĕнче кăнтăрлачченхалăх пурăнакан 4 пункта йышăнса илнĕ. Каялла чакакан противника хăваласа пырса, пирĕн боецсем çав кунах халăх пурăнакан тата 3 пункта йышăнса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче пирĕн войскăсем пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 11 пункта нимĕç захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă.

Вĕçĕ 4-мĕш страницăра

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

„Солдатская правда" хаçат

Январь уйăхĕнче пулса иртнĕ çапăçусенчен пĕринче вилнĕ салтак çумĕнче Кăнтăр-Хĕвеланăç фронтĕнчи «Солдатская правда» хаçатăн хупа типтерлĕ чăркаса тĕплĕ пытарнă номерне тупнă. Çак хаçатăн уйрăм номерĕсене нимĕçсен тыткăна лекнĕ салтакĕсем çумĕнче те тупаççĕ. Тыткăна лекнисене усрамалли лагерьте 68-мĕш дивизири офицертан Андреас Бухартран: эсĕ «Солдатская правда» хаçата вуланă-и, ун çине пичетлесе кăларакан материалсем çинчен мĕн шухăшлатăн? тесе ыйтнă. Вăл, тахçанхи фашист, 1933 çултанпа гитлерла партире тăраканскер, нумаях та пулмасть Мангейм хулин бургомистрĕ пулнăскер, çапла ответленĕ: эпĕ çав хаçата курнă, мĕншĕн тесен эпĕ хамăн обязанноçа пула ăна салтаксенчен пухса илеттĕм, ăна вулакалаттăм та, анчах вăл ман шутăмпа тĕрĕс маррине сырать, тенĕ. Вара ăна «Солдатская правда» хаçатăн темиçе номерне тата карандаш панă та вăл хăй мĕн тĕрĕс мар тесе шутланине паллă туса тухма хушнă. Офицер хаçатсене нумайччен вуланă, кимĕн тума аптраса иккĕленсе тăнă, унтан пăхса сăнаса тăракансем, нимĕçсен тыткăна лекнĕ 250 салтакĕ, хыттăн ахăлтатса кулнă вăхăтра çапла каланă: «Нимĕне те паллă тума пултараймастăп, пурте тĕрĕс», тенĕ.

«Солдатская правда» хаçат нимĕçсен салтакĕсене нумайĕшне мĕнле влияни панине фашистла хаçатсем унпала час-часах тавлашăва кĕрсе кайнă факт та кăтартса парать. «Солдатская правда» хаçатра пичетленĕ статьясем çинчен, Геббельсăн суйине кăтартса паракансемсем çинчен, салтаксем кăна мар, гитлерла çарăн хăшпĕр офицерĕсем те час-часах шухăша каяççĕ.

Нимĕçсен 9-мĕш дивизийĕнчи 2-мĕш велоэскадронăн тыткăна лекнĕ командирĕ лейтенант Курт Вайтенштейн допросра çапла каланă: «Эпĕ салтаксенчен туртса илнĕ «Солдатская правда» хаçатăн экземплярĕсене вуласа пăхнă хыççăн манăн куçăмсем уçăлчĕç», тенĕ.

«Солдатская правда» хаçат Германи фашизмне хирĕç пуçланнă отечественнăй аслă вăрçăн малтанхи кунĕсенчех çуралнă. Февралĕн 5-мĕшĕнче ку хаçатăн çĕрмĕш номерĕ пичетленсе тухнă.

(ТАСС).

ХĂЮЛЛĂ ПАРАШЮТИСТСЕМ

Орденоносец майор Старчак командирăн парашютистсен десант группи тăшманăн тылне пĕрре мар хăюллăн ана-ана ларнă. Пĕр юлашки операцие кăна шутласан та, паттăр парашютистсем нимĕçсен тылĕнче 29 кĕпер сирпĕнтернĕ, 48 автомашина, 2 танк, штабăн 2 машинине çунтарса янă; нумай хĕçпăшал пĕтерсе тăкнă тата нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна ытла вĕлернĕ.

Укерчĕк çинче: парашютистсен группин командирĕ майор И. Г. Старчак дивизионнăй комиссара В. Я. Клочкова (сулахайра) хăй отрячĕн боевой ĕçĕсем çинчен каласа парать.

М. РУНОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Шурлăх урлă

Вут-хĕмлĕ çапăçу вăйланса пынă вăхăтра батальон командирĕ старший лейтенант темиçе связиста хăй патне чĕнсе илчĕ те, хăйĕн умне хăвăрт карттă сарса хурса, фашистсем каялла чакакан В. ялĕ çине пӳрнипе тĕллесе кăтартрĕ. Эпир, связистсем, çак ялта тăракан хамăр разведчиксем валли сыхăну линине йĕркелеме задани илтĕмĕр. Ку ĕçе ертсе пыма кĕçĕн сержанта Иванов юлташа уйăрчĕç.

Яла пырса кĕме шурлăх урлă каймалла пулнă. Эпир пĕчĕк тĕме хыçне хырăмпа шуса пырса, ялта мĕн пулса иртнине сăнама тытăнтăмăр.

Фашистсем шурлăхăн сулахай енĕпе çаплах ял патнелле чакаççĕ. Пирĕн хамăрпа пĕрле хутпа пĕркенĕ кабельлĕ катушкăсем пурччĕ, анчах кусене пирĕн боецсем шыв урлă карма юраманнине аван пĕлнĕ.

— Линине шурлăх урлă каратпăр, — терĕ кĕçĕн сержант.

Аллă метр кайнă хыççăн пурте шурлăха чĕркуççи таран путакан пултăмăр. Тĕллĕн-тĕллĕн ларакан хăвасене авса, линине çакса хăваратпăр. Ерипенех шыва пилĕк таран кĕме пуçларăмăр. Линине шыв тăрăх чăсса пынă майăн пралук шыва пута пуçларĕ. Мĕн тумалла? Красноармеец Сенченко хăй çинчи кĕпине хывса илсе, ăна часах чĕркелесе кантра вырăнне туса хучĕ. Çапла линине йĕркене кĕртрĕмĕр.

Пĕр боецăн урине шывра темле кантра евĕрлĕскер çакланнине туйсан, ăна вăл туртса кăларчĕ те тӳрех:

— Ачасем, нимĕçсен кабелĕ! — тесе шăппăн пĕлтерчĕ боецсене. Эпир туртса кăларнă кабеле татса илсе малалла шурăмăр. Вунпилĕк минута иртмерĕ, пĕр пĕчĕк тĕмĕ хыçĕнчен пĕр нимĕç салтакĕн кĕлетки курăнса кайрĕ. Вăл хăйсен линине сыхланă пулмалла. Часах Сенченко пульли лекнипе нимĕç салтакĕ çĕре каска пек тĕшĕрĕлсе ӳкрĕ.

Пахчасемпе çатан картасен хыçĕпе упалене-упалене ял таррине кĕтĕмĕр. Пĕр пысăк пӳртĕн чердакĕ çине хамăрăн аппаратсене вырнаçтарса лартса, командăй пункта кирлĕ сведенисем пама пуçларăмăр. Ытти боецсем нимĕçсен сыхăну йĕркине пăсма васкарĕç.

Часах, хамăрăннисем çитсен, В. ялне йышăнтăмăр.

М. КАНЬКОВ.

Действующи арми.

Нимĕçсем çапăçăва мĕнле резервсем кĕртеççĕ

Пирĕн войскăсем ăнăçлăн хĕссе пынă пирки нимĕçсен çар командованийĕ çĕнĕрен-çĕнĕ резервсем илсе килсе çапăçăва кĕртсе ярать. Малтан нимĕçсем ку резервсене çуркуннеччен тытса тăма шутланă пулнă. Январь уйăхĕнче кăна фашистсем хĕвелтухăç фронтне çĕнĕрен вунвиçĕ пехотнăй дивизи, халиччен çапăçура пулманскерсене, илсе килнĕ. Фронта килме çула тухнă дивизисем темиçешерĕн шутланаççĕ.

Тăшманăн юлашки уйăхсем хушшинче фронтра çапăçнă дивизийĕсем йăлтах халран кайнă. Вĕсенчен нумайĕшне пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех аркатса тăкнă, çавăнпа вăл дивизисенче, темиçе хутчен те çĕнĕ вăйсем хушнă пулин те, салтаксен хисепĕ нумай мар. Германин танковăй дивизийĕсенче, пирĕн хĕвеланăç фронтĕнчи войскăсене хирĕç çапăçаканскерсенче, декабрĕн 18-мĕш тĕлне мотополксенчи кашни ротăра 20—30 çын таран пулнă (2, 5, 11-мĕш дивизисем). Ку дивизисем тахçанах ĕнтĕ танковăй дивизи вырăнне шутланма пăрахнă: вĕсем халь ахаль пехотнăй дивизисем кăна пулса юлнă.

Хăйсен салтакĕсем питĕ нумай пĕтнĕ пирки нимĕçсем хăйсен специальнăй подразделенийĕсене çапăçăва кĕртеççĕ. Сăмахран, нимĕçсен 31-мĕш пехотнăй дивизине илсе пăхар. Ку дивизи хăйĕн сылтăм флангне хӳтĕлеме чугунçул çинчи строительнăй батальонпа усă курнă. Салтаксен рочĕсем çавтери сайралса юлнă пирки дивизин ирĕксĕрех çак пĕртен-пĕр юлашки резервпа усă курмалла пулнă.

Нимĕçсем хăйсен чаçĕсене çапăçу вăхăтĕнче татти-сыпписĕрех çĕнĕ вăйсем хушса тултарса пынă. Çак шутпа вĕсем Германирен тата хăйсем тытса илнĕ çĕршывсенчен çĕнĕ батальонсем илсе килсе тăнă. Нимĕç чаçĕсене халĕ çавăн пек запаслă батальонсем нумай хушса панă. Сăмахран, 36-мĕш мотодивизине икĕ запаслă батальонсем шучĕпе икĕ хутчен пысăк вăйсем хушса панă.

Пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем вăйлă наступлени пуçласа янăран вара нимĕçсен питĕ нумай дивизийĕсене аркатса тăкнă. Е пĕр участокра, е тепĕр участокра вăйсем йăлтах пĕтсе çитнĕ пирки нимĕçсен унта пачах çĕнĕ дивизисем ямалла пулнă. Характерлă факт вырăнне кунта çакна палăртса хăвармалла: январь уйăхĕнче нимĕçсен çар командованийĕ çĕнĕрен 13 дивизи çапăçăва кĕртсе янă. Анчах та вăл дивизисене тĕрлĕ вырăнсене сапаласа яма тивнĕ, мĕншĕн тесен пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем вĕсен фронтне тĕрлĕ вырăнсенчен шăтарса-шăтарса кĕнĕ. Хĕрлĕ Çар чаçĕсем нимĕçсене Кăнтăр фронтĕнче вăйлăн пырса çапнă хыççăн вĕсем унта çĕнĕ войскăсем янă. Çав вăхăтрах нимĕçсем Тихвин патĕнче пысăк поражени тӳсрĕç. Ку шăтăка питĕрсе лартма та вĕсен çĕнĕ вăйсем яма тивнĕ. Ют çĕршывсенчи хаçатсем кăтартнă тăрăх, нимĕçсем унта хăйсен чаçĕсене тултарма 23-мĕш пехотнăй дивизипе запасра тăракан 5 батальона янă. Çакнашкалах Калининпа Волоколамск патĕнчи çапăçусене те çĕнĕ дивизисем кĕртсе пынă. Тепĕр майлă каласан, Хĕрлĕ Çар нимĕçсене ăçта çапа-çапа салатать — çавăнта вĕсем резерври вăйсене кĕртсе яраççĕ.

Ăçтан килсе тăраççĕ-ха фашистсен çав çĕнĕ дивизийĕсем, еплерех-ха вĕсен вăйĕ? Вăл дивизисенчен нумайĕшĕсем — ку вăхăтчен Германи тытса илнĕ çĕршывсенче тăнăскерсем. Германи çар командованийĕн вăл дивизисене ирĕксĕрех Хĕвелтухăç фронтне куçарма тивет. Ку вăл, паллах, Германин хăй тытса илнĕ çĕршывсенчи позицине чылай вăйсăрлатать.

Çапăçас тĕлĕшрен илсе пăхсан, нимĕçсен çĕнĕ дивизийĕсем Германия вăрçăн малтанхи кунĕсенче çапăçăва кĕртсе пынă дивизисенчен нумай каярах. Салтаксем хушшинче ытларах та ытларах австриецсемпе чехсем тĕл пулаççĕ. Кунсăр пуçне халь çапăçăва кĕрекен нимĕç салтакĕсем çул енчен илсен те малтанхи салтаксенчен пайтах асларах. Ку вăхăтчен сывлăх начар пирки отсрочкăпа усă курса пурăннисене, политика тĕлĕшĕнчен шанчăксăртарах тесе çар служибинчен хăтарнисене, вăрçă хатĕрĕсем туса кăларакан заводсенчи рабочисене тата çул çитмен çамрăксемпе çултан тухнă ватăсене те нимĕç командованийĕ халĕ çапăçăва кĕртсе пырать.

Хĕвеланăç фронтĕнче çапăçакан пирĕн войскăсене хирĕç нимĕçсем нумаях пулмасть ытти дивизисемпе пĕрле 216-мĕш пехотнăй дивизие кĕртсе янă пулнă. Унччен ку дивизи Францире çыранри охранăра тăнă. Вăл Сухиничи районĕнчи çапăçу участокне январь уйăхĕн пуçламĕшĕнче килсе çитнĕ. Çак дивизин икĕ полкне пирĕн войскăсем çавăрса илсе питĕ хытă аркатса тăкнă. Çакна пула дивизи командованийĕ Шайково станци районĕнче саперăй батальонпа сыхăну ротине çапăçăва кĕртсе янă. Кăна ирĕксĕрех çапла тума тивнĕ, мĕншĕн тесен нимĕçсен çухатăвĕсем çавтери пысăк пулнă.

Нимĕçсем пирĕн Хĕвеланăç фронтне Грецирен 164-мĕш пехотнăй полка, Польшăран — 208-мĕш пехотнăй дивизие куçарчĕç. Çак дивизисенче иккĕшĕнче те офицерсен составĕ резервистсенчен кăна тăрать.

Пирĕн Хĕвеланăç фронтри участоксенчен пĕринче нимĕçсемпĕн йывăр положени килсе тухсан, вĕсем унта Краковран «СС» ятлă 4-мĕш мотополка васкавлăн самолетсемпе илсе килнĕ. Калас пулать, нимĕçсем хăйсен çĕнĕ чаçĕсене çапăçăва куçарас ĕçре транспорт самолечĕсемпе пĕрремĕш хут çеç мар усă кураççĕ. Ку çеç те мар, килсе тухнă обстоятельствăсене пула, нимĕçсен çар командованийĕн хăйĕн сывлăп десантĕн бригадипе парашютнăй полкне ахаль пехота вырăнне çапăçăва кĕртсе яма тивнĕ.

Пирĕн Хĕвеланăç фронтне январь уйăхĕ хушшинче Германин çĕнĕ чаçĕсемсĕр пуçне чаçсене тултарма резервра тытса тăнă батальонĕсем те таттисыпписĕрех килсе тăнă. Сăмахран, 5-мĕш танковăй дивизие, танкĕсем тахçанах пĕтсе çитнипе пехотнăй дивизи çеç пулса юлнăскерне, 327-мĕш запаснăй мотобатальонран çĕнĕ вăй хушса панă, 6-мĕш танковăй дивизие запасра тăракан офицерсенчен 150 çын хушса парса çирĕплетнĕ.

Нимĕçсем хăйсен резервĕсене фронта куçарас ĕçре питех те пысăк чăрмавсем чăтса ирттереççĕ. Ку чăрмавсем нимĕçсем вăхăтлăха тытса илнĕ Совет территорийĕсем çинчи чугунçулсем начар ĕçленинчен тухса тăраççĕ. Вăл çулсене пирĕн Хĕрлĕ Çар чаçĕсем каялла чакса кайнă чух самаях çĕмĕрсе хăварнă, çавăнпа пирки вĕсем тăрăх войскăсене хăвăрт та массăллăн куçарма май çук. Кунсăр пуçне тата нимĕç эшелонĕсене чугунçулсем тăрăх куçса çӳреме пирĕн партизансем питĕ хытă чăрмантараççĕ.

Нимĕçсем пирĕн Хĕвеланăç фронтне кĕртсе яракан çĕнĕ дивизисем — Германи çарĕн тĕп командованийĕн резервĕнче тăнă дивизисем. Вăл резервсене нимĕçсем нимĕнрен ытларах хăйсем тытса илнĕ çĕршывсенчен куçарса килеççĕ. Вĕсен шучĕ чаксах пырать ĕнтĕ. Ситменнине тата нимĕçсем вăл салтаксене пĕтĕмĕшпех Хĕвелтухăç фронтне куçарма пултараймаççĕ, мĕншĕн тесен оккупациленĕ çĕршывсенче йĕрке тытса тăма яланах хĕçпăшаллă вăй усрама тивет.

Паллах, Германия хальхи вăхăтра тытамака ерсех çĕнĕрен чаçсем пухса хатĕрлет. Гитлеровецсем çынсен резервĕсене пĕтĕмĕшпех мобилизацилеççĕ. Анчах та Хĕрлĕ Çар, тăшманăн планĕсене аркатса ярса, ăна çавтери пысăк çухатусем кӳрет; çавăнпа та фашистсем çапăçăва çĕнĕрен-çĕнĕ резервсем кĕртсе пыраççĕ. Çакă вăл тăшманăн вилĕм сехетне çывхартнăçемĕн çывхартса килет. Гитлерла Германие пĕтĕмĕшпех аркатса тăкассине хăвăртлатать.

Майор Я. МИЛЯЕВ.

(«Красная звезда»).

Англипе Совет Союзĕнчи профсоюзсен комитечĕ гитлерла Германия чуралантарнă çĕршывсенчи рабочисемпе работницăсене чĕнсе калани

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англипе Совет Союзĕнчи профсоюзсен комитечĕ гитлерла Германия чуралантарнă çĕршывсенчи рабочисемпе работницăсене чĕнсе каланине пичетлесе кăларнă. Чĕнсе калани çине ВЦСПС секретарĕ Шверник тата Англири тред-юнионсен конгресĕн генеральнăй секретарĕ Ситрин алă пуснă. Манифестра çапла каланă:

«Гитлеризма — мĕнпур этемлĕхĕн тăшманне — хирĕç, ирĕклĕхшĕн пыракан аслă кĕрешĕвĕн çак хаяр самантĕнче Англипе Совет Союзĕнчи профсоюзсен комитечĕ халĕ фашистла тиранин пусмăрĕ айĕнче асапланса пурăнакан мĕнпур çĕршывсенчи рабочисемпе работницăсене тăванла туслăхпа салам ярса, чĕнсе калать. Эпир сире хастарлă та çирĕп пулма чĕнетпĕр. Эсир ирĕке тухас вăхăт çывхарса килет.

Гитлер — ирĕклĕ халăхсен палачĕ — Европăна юхăнтарса çаратса хăварчĕ. Европăн миллионшар çыннисене чуралантарчĕ. Европăри нумай государствăсен никама пăхăнманлăхĕпе ирĕклĕхне пылчăка таптаса путарчĕ. Совет Союзне, Великобритание тата вĕсен союзникĕсене хирĕç юнлă вăрçă туса пырса, гитлерла Германия, преступлени тăвас тĕлĕшпе хăйпе пĕр каварлисемпе пĕрле, çĕнĕрен-çĕнĕ территорисем тытса илсе, ирĕклĕ халăхсене чуралантарма тăрăшать.

Анчах ун пек нихçан та пулмĕ. Англи хулисем çине сывлăшран хаяррăн тапăнни те, гитлерла йыткĕтĕвĕсем совет территорийĕнче юн тăкса тискеррĕн çĕмĕрсе çӳрени те Гитлера пирĕн халăхсене пăхăнтарма май памĕ. Пысăк жертвăсем тата ĕмĕрне илтмен асапа тӳсеççĕ пулин те, Совет Союзĕпе Великобритани халăхĕсем гитлеризма хирĕç кĕрешеççĕ, малашне те кĕрешсе пырĕç. Фашистсен террорĕпе хаярлăхĕ вĕсен боевой шухăш-кăмăлĕсене, вĕсем çĕнтерӳ тума хатĕррине хавшатаймĕç, хавшатас та çук.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фрончĕн çавтери анлă таккăшĕнче фашистсен çарĕ икĕ уйăх хушши ĕнтĕ поражени хыççăн поражени тӳссе пырать. Вĕсем Хĕрлĕ Çар паттăрла наступлени туса пынине хирĕç тăма пултараймаççĕ, хĕвеланăç еннелле чакса пыраççĕ. «Совет войскисене çиçĕм пек хăвăрт пĕтерсе тăкăпăр» тесе Гитлер час-часах хыттăн суйăхса пĕлтернисем пĕтĕмпех арканса кайрĕç. Хĕрлĕ Çар вăйлăн пыра-пыра çапнине пула Гитлерăн çаратуçă çарĕ хăйне çĕнтерекенни никам та çук текен сĕмсĕр шанчăкне çухатрĕ.

Гитлерăн фашистла çарне пĕтĕмпех те тĕппипех аркатса тăкас вăхăт çывхарса килет. Гитлера тавăрас тапхăр çывхарса килет. Çакăнта ĕнтĕ гитлеризм тунă пур преступленисемшĕн те, выльăхла ирсĕрлĕхшĕн те, юри ишĕлтерсе, юхăнтарса хăварнисемшĕн те Гитлера тавăрĕç. Гитлерла Германие пĕтĕмпех аркатса тăкнипе пĕрлех ирĕке юратакан мĕнпур халăхсем хăйсен ирĕклĕхне туянĕç. Франци, Норвеги, Чехословаки, Польша, Югослави, Греци тата çаратнă, пусмăрланă ытти çĕршывсен халăхĕсем те ирĕке тухас шанчăк çав халăхсене гитлеризма пĕтерсе тăкас ĕçре вăй хурса паттăррăн та татăклăн кĕрешме хавхалантарать.

Çав çĕршывсенчи мĕнпур рабочисене эпир çапла калатпăр: «Тăвансем! Гитлеризма хирĕç пыракан кĕрешӳре эсир пире пулăшу пама пултаратăр. Гитлер сире Германи промышленноçĕн тата хăй тытса илнĕ ытти çĕршывсен промышленноçĕн чурисем туса хунă. Сире вĕлеретпĕр е питĕ хаяр наказани паратпăр тесе хăратса ĕçлеттереççĕ. Эсир хăвăрăн юлташăрсене — Совет Союзĕнчи тата Великобританири рабочисене — пĕтермешкĕн, вĕсен хулисемпе ялĕсене пĕтерсе тăкмашкăн, аркатмашкăн фашистсене танксем, самолетсем, орудисем тата боеприпассем туса паратăр.

Эпир хутшăнма чĕнекен кĕрешӳ сиртен пысăк жертвăсем тума ыйтнине эпир пĕлетпĕр. Эпир хамăр та, хамăрăн ирĕклĕхшĕн кĕрешнĕ чухнехи пекех, сирĕн ирĕклĕхшĕн те çав жертвăсене тăватпăр. Çак хăрушă вăрçăра жертвăсемсĕр, паттăрлăхсăр, чăтăмлăхсăр ирĕклĕхе хӳтĕлесе хăварма çук.

Совет Союзĕпе Англи профсоюзĕсем организациленĕ рабочисен 30 миллионлă йышĕн ячĕпе пирĕн Англипе Совет Союзĕнчи профсоюзсен комитечĕ, гитлеризма аркатса тăкас вăхăта çывхартас тесе, кĕрешĕве мĕнпур вăя хурса вăйлатма чĕнет.

Мĕнпур союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсем, гитлеризм пусмăрне сирсе пăрахас тесе, сирĕн пата пулăшу пама пырас вăхăт çывхарса килет.

Çавăнпа та гитлерла Германи валли кунран кун сахалрах та сахалрах хĕçпăшал тăвас тесе ĕçлĕр. Станоксемпе машинăсен ĕçне вăрахлатăр. Сĕмсĕр пусмăрçăсем валли ирĕксĕр тума тивнĕ хĕçпăшала пур майсемпе те пăсса пырăр. Хăвăр туса кăларакан танксене, самолетсене, бронемашинăсене часах юрăхсăра тухмалла тăвăр. Минăсемпе снарядсене çурăлса каймалла мар тăвăр. Чугунçул ĕçне пăсса пырăр. Гитлерла бандитсене турттаракан, вĕсем сире те, пире те пĕтерме боеприпассемпе хĕçпăшал турттаракан транспорта пăсăр. Хăвăр мĕн пĕтерме пултарнине тата Гитлера усă паракан япаласене пурне те пĕтерĕр.

Гитлера хирĕç пыракан вăрçă тĕрĕс вăрçă пулнине яланах асра тытăр.

Пирĕн ĕç — тĕрĕс ĕç!

Гитлеризма пурнĕрех аркатса, пĕтерсе тăкатпăр!

Çĕнтерӳ пирĕн алăра пулĕ!

Кĕрешӳ патне, малалла!

Малалла, юлташсем, çĕнтерӳ патне!»

Шверник юлташ Лондонри пресс-конференцире тухса калани

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Совет профсоюзĕсен Англие кайнă делегацин руководителĕ Шверник юлташ Лондонри пресс-конференцире тухса çапла каланă:

«Хаçат корреспонденчĕсем Совет профсоюзĕсен делегацине чылай ыйтусем пачĕç. Анчах та çав ыйтусем çине ответ париччен эпĕ малтан, делегаци хушнипе тата унăн ячĕпе, çакăн çинчен каласшăн: делегаци хăй Великобританире пулнипе питĕ кăмăллă, çавăн пекех тата вăл хăй умĕнче тăнă задачăсене ĕçе лайăх кĕртнĕ тесе шутлать. Делегаци вунă хулара ытла, утмăла яхăн заводсемпе фабрикăсенче, шахтăсенче, суднăсем тăвакан верфьсенче пулчĕ, хĕрĕхе яхăн митингсем тата рабочисемпе работницăсем хушшинче темиçе çĕр калаçусем туса ирттерчĕ. Делегаци хăй пулнă хуласенче пуриничче те тенĕ пекех нимĕç фашисчĕсен самолечĕсем бомбăсем пăрахнă вырăнсемпе паллашрĕ. Çавăн пекех тата делегаци гражданла оборонăна мĕнле организациленине, çав оборонăна халăх мĕнле хутшăнса ĕçленипе те паллашрĕ. Делегаци хăйне пур çĕрте те пит те кăмăллăн кĕтсе илнине уйрăмах паллă туса хăварать. Делегацин тĕл пулма тӳрĕ килнĕ пур организацисем те, должноçра тăракан пур çынсем те делегацие пит те сума суса йышăннă, унăн ыйтăвĕсене пурнăçа кĕртес тесе мĕн тумаллине пĕрне те тумасăр ирттерсе яман. Рабочисемпе работницăсен массисем, гражданла халăх делегаци пулма тӳрĕ килнĕ вырăнсенче пуринче те делегацие хĕрӳллĕн саламласа хапăл туса йышăннă. Çаксене пурне те делегаци çапла пахалать: çакă вăл пĕтĕмпех Совет Союзĕ тĕлĕшпе хăйсен чи лайăх туйăмĕсене палăртма тăрăшни пулать, Совет Союзне чунтан тавтуни пулать. Великобритани халăхĕ лайăх курать: Совет Союзĕ нимĕçсен тĕп вăйĕсене Хĕвелтухăçне куçарттарса каймалла тунипе Великобритание пысăк пулăшу пачĕ тата халĕ те парса тăрать, çапла майпа Совет Союзĕ Великобритание унăн утравĕсем çине гитлерла бандăсем кĕрсе каяссинчен тата Лондонпа ытти хуласем çине нимĕç самолечĕсем бомбăсем пăрахассинчен хăтарса тăрать. Çавăншăн ĕнтĕ Великобритани халăхĕ Совет Союзне чунтан тавтунине делегаци умĕнче пур майсемпе те палăртма тăрăшрĕ.

Нумайĕшĕ, çав шутрах хаçат корреспонденчĕсем те, çакăнпа интересленеççĕ: Британи промышленноçĕн ĕçĕ пирки делегаци Совет Союзне мĕнле шухăшсемпе таврăнать-ши? — теççĕ. Делегаци çапла шутлать: промышленноçа пĕтĕмĕшпе илсен, унăн ĕçне делегаци çитсе курнă фабрикăсемпе заводсен ĕçĕ тăрăх хакласан, Британи промышленноçĕ лайăх ĕçлет. Делегаци хăй пулнă фабрикăсемпе заводсенче производствăна лайăх организациленине, техника тĕлĕшпе промышленноçа лайăх хĕçпăшаллантарнине курчĕ.

Анчах та чи хакли те пахи — Британи рабочийĕсемпе работницисем иксĕлми çирĕп шухăш-кăмăллă пулни пулса тăрать. Делегаци шухăшĕпе, Британи рабочийĕсемпе работницисем тĕнчери хальхи мĕнпур обстановка йывăррине, çĕршер миллион çынсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕ хура хăрушлăх умĕнче тăнине вĕсне çитичченех ăнланаççĕ. Çавăн пирки ĕнтĕ тата Совет Союзĕ гитлерла Германие аркатса тăкас ĕçре мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăнине кура, Британи рабочи класĕ Великобритани промышленноçĕ татах та лайăхрах ĕçлетĕр тесе, хăйĕнчен мĕн кирлине пурне те туса пама яланах хатĕр тăрать, Британи рабочи класĕ Великобритани çарĕпе Совет Союзĕн Хĕрлĕ Çарĕ валли танксем, самолетсем тата ытти хĕçпăшалсем ытларах та ытларах туса кăларассишĕн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлет. Британи рабочи класĕн çавăн пек хăватлă та сӳллĕ шухăш-кăмăлĕ тата çак енчен те питĕ хаклă: Великобритани промышленноçĕн хăйĕн ĕçĕнчи хăвăртлăхсене мĕнле пулсан та ытларах, ӳстерчĕçемĕн ӳстерсе пыма тивет. Хăвăртлăхсене ӳстерме вăрçă ĕçĕсем ыйтаççĕ, çав хăвăртлăхсене ӳстерме ирĕклĕхе юратакан мĕнпур халăхсен интересĕсем, пуринчен малтан Великобритани халăхĕн хăйĕн интересĕсем ыйтаççĕ. Британи промышленноçĕн пур йышши продукци производствине те ӳстерме пур тĕрлĕ майсем те пур. Делегаци çакна палăртса калать: промышленноçăн ĕçе яман резервсем татах та нумай пур-ха. Мĕнле резервĕсем пуррине пурне те асăнса тухма йывăр, мĕншĕн тесен кашни фабрикăра е заводра хăйĕн паллă уйрăмлăхĕсем пур. Анчах та пĕтĕмĕшпе илсе каласан, çав резервсем çаксем пулса тăраççĕ: чылай предприятисенче унти мĕнпур оборудованипе, станоксемпе, машинăсемпе тата ыттисемпе те туллин усă курмаççĕ, промышленноçра ĕçлеме хĕрарăмсене, кун çинчен Великобритани правительстви уйрăмăн йышăннă решени пур пулин те, çителĕклĕ явăçтарман, хăшпĕр предприятисенче рабочисемпе работницăсен пуçарулăхне, вĕсен рационализаторла сĕнĕвĕсене тĕрĕс хак памаççĕ, рабочисем, работницăсем тата цехсенчи старостăсем каланине шута илсех пымаççĕ, уйрăм предприятисенче ĕç тухăçлăхне кăтартнă виçерен çӳлерех хăпартассишĕн тăрăшмаççĕ.

Кирек хăш предприятире те унăн хăйĕн мĕнле резервсем пуррине лайăхрах пĕлес тесен, продукци туса кăларассине ӳстермешкĕн мĕн тума кирлине лайăхрах пĕлес тесен, — ытлашши нимех те кирлĕ мар, мĕн пурĕ те рабочисемпе тата работницăсемпе калаçса пăхмалла çеç. Рабочисемпе работницăсем вĕсем хăйсемех каласа кăтартаççĕ; ăçта тата мĕн пирки оборудованипе çителĕклĕ усă курманнине те, производствăра рабочисене простойсем тутаракан çитменлĕхсем ăçтине те, мĕнле операцисенче квалификациллĕ рабочисен вăйĕпе çителĕклĕ усă курманнине т. ыт. те кăтартса пама пултараççĕ. Совет профсоюзĕсен делегацийĕ çакна ĕненсе шанса тăрать: делегаци Великобритани рабочийĕсемпе тата работницисемпе тĕл пулни Британи рабочи класĕпе Совет Союзĕнчи рабочи класс хушшинчи туслăха тарăнлатса çирĕплетме пулăшĕ, Совет Союзĕпе Великобританин тата вĕсен союзникĕсен тăшманне, гитлерла Германие, çапса аркатса татăклăнах çĕнтерме Британи рабочи класĕ мĕн тума вăй çитнине пурне те ытлашшипех тăвĕ. Совет Союзне таврăнсан, делегаци, Великобритани рабочи класĕ чун-чĕререн янă салама каланипе пĕрлех, Совет Союзĕнчи рабочисемпе работницăсене тата çакăн пек ĕнентерсе шантарĕ: Великобритани рабочи класĕ халăхсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕн тăшманне, гитлеризма, татăклă çĕнтерессишĕн кĕрешме яланах хатĕр тăрать, Совет Союзĕнчи рабочи класа, нимĕçсен фашистла бандисене геройла çĕмĕрекен паттăр Хĕрлĕ Çара пулăшма мĕн кирлине пурне те пĕтĕмĕшпех туса пама хатĕр тăрать. Делегаци çапла шутлать: Совет Союзĕпе Великобритани хушшинче политикăллă йĕрке тĕлĕшпе уйрăмлăхсем пулни икĕ çĕршыври рабочи класа гитлеризма хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăйсен мĕнпур вăй-халне пухса пĕрлештерессине, СССР Совнаркомĕн председательне Сталин юлташа тата Великобританин премьер-министрне господин Черчилле çав кĕрешӳ ĕçĕнче туллин пулăшса пырассине пĕрре те чарса тăрас çук».

Шверник юлташ Совет профсоюзĕсен делегацийĕн ячĕпе премьер-министра Черчилле, Великобританин пĕтĕм правительствине тата уйрăмах лорд Бивербрука, информаци министрĕпе унăн вырăнсенчи çыннисене, Британи тред-юнионĕсен Генеральнăй Советне тата унăн руководителĕсене Уолстен Крафтпа Ситрина Совет профсоюзĕсен делегацине хапăл туса йышăннăшăн чунтан тав турĕ.

«Совет профсоюзĕсен делегацийĕ, — тенĕ Шверник юлташ юлашкинчен, — çакна çирĕп шанса тăрать: эпир Великобритание килсе кайни, Британи тред-юнионĕсен Генеральнăй Совечĕн руководителĕсемпе куçа-куçăн курса калаçни Совет Союзĕпе Британи профсоюзĕсем хушшинчи туслăха, гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешӳри пирĕн пĕрлехи ĕçе малалла татах та ытларах вăйлатса çирĕплетме пулăшĕ».

Хĕрлĕ Çар валли

СОВЕТСКОЕ. Шемшеш вăтам шкулĕнчи пионерсемпе комсомолецсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă куна кĕтсе илме хĕрсех хатĕрленеççĕ. Вĕсем паттăр Хĕрлĕ Çар валли ăма 60 чăх самăртма тытăнчĕç.

Нина Юнкерова 2 чăх, Лиза Иванова 2 чăх, Валя Барсатов 2 чăх тата ыттисем те пĕрер те икшер чăх самăртаççĕ.

Çавăнпа пĕрлех шкулта çарпа физкультура ĕçне те аван йĕркеленĕ. Часчасах противогазсем тăхăнса походсем туса ирттереççĕ, халь вĕренекенсем кашниех кросс хутшăнма тăрăшаççĕ. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă кун ачасем спектакль лартса параççĕ. 7—8—9-мĕш классенчи пионерсемпе комсомолецсем Хĕрлĕ Çар çинчен юрăсем вĕренеççĕ. Хор кружокне 7-мĕш класри пионер Миша Герштейн ертсе пырать. Вăл мандолина аван калать. Шкул коллективĕ боецсем патне 3 хутчен парнесем ярса пачĕ. Халĕ конвертсемпе табак хутаççисем чиксе тата тепĕр парне яма хатĕрленеççĕ.

Вĕренекенсен парнисем

ШАХАСАН. Вăтам шкулти комсомолецсемпе çамрăксем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа боецсем патне парнесем ярса пама хатĕрленеççĕ. Паянхи куна пĕр килограмм махорка, 8 енчĕк, 2 сăмса тутри, 10 коробка спичка пухăннă.

Тури Сурăмри «Заря» колхозри комсомолецсем спектакль лартса тупнă 20 тенкĕ укçана оборона фондне хывнă.

В. ЯКОВЛЕВ.

Шкулти комсомол организацийĕн ĕçĕсем

ЕТĔРНЕ. Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче комсомолăн Ядринăри вăтам шкул çумĕнчи пуçламĕш организацийĕ хăйĕн ĕçне тĕпренех урăхлатса çĕнетрĕ. Комсомол комитечĕ комсомолецсене политикăллă пĕлÿ парас, вĕсен вĕренÿ пахалăхне хăпартас ĕçсене, союзра тăман вĕренекенсемпе ĕçлессине лайăх туса пырать.

Комсомол организацийĕнче 36 комсомолец. Вĕсем пурте общественăллă ĕçсене хутшăнаççĕ. И. Кудряшов—учком председателĕ, Г. Сорокин—шкулти «Ленин çулĕпе» стена хаçачĕн ответлă редакторĕ, осоавиахим пуçламĕш организацин председателĕ, Ф. Токарев—МОПР ячейкин председателĕ, Абрамова—старший пионервожатăй. Пурте вĕсем хăйсен вырăнĕнче кăтартуллă ĕçлеççĕ.

Комсомол комитечĕ вĕренÿре юлса пыракансене пулăшассине лайăх организацилерĕ. Малтанхи чĕрĕксенче А. Толстов, А. Яриков вĕренекенсем начар паллăсем илетчĕç. Çавăнпа комсомол комитечĕ вĕсене комсомолецсем çумне çирĕплетрĕ. Халĕ вĕсем лайăх вĕренекен пулчĕç. Кушашкал тĕслĕхсем кунта вуншарăн шутланаççĕ.

Комсомол комитечĕн секретарĕ П. Краснов юлташ союзра тăман вĕренекенсемпе тăрăшса ĕçлет. Вĕсемпе уйрăм калаçусем туса ирттерет, ВЛКСМ уставĕпе тата программипе паллаштарать. Çакна пула организацин йышĕ те кунсеренех ÿссе пырать. Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа 11 вĕренекене Ленинла—Сталинла комсомол ретне илнĕ. Вĕсем халĕ вĕренÿре те, ĕçре те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Е. Рыбаков, Н. Михайлов вĕренекенсем, тин кăна комсомол ретне кĕнĕскерсем, шкултан таврăнсан хăйсен пушă вăхăтне ялахах колхозниксемпе пĕрле ирттереççĕ. Колхозниксене Совет Информаци Бюровĕ паракан сводкăсене вуласа ăнлантараççĕ. Е. Рыбаков юлташ колхозниксем хушшинче тĕрлĕрен темăсемпе докладсем, калаçусем туса ирттерет.

Вĕренекенсемпе учительсем тăван çĕршыв оборонин фондне тăвас, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçсене те активлăн хутшăнаççĕ. Комсомолецсемпе çамрăксен вăйĕ хутчен пулнă Пĕтĕм Союзри воскресникĕсенче вĕсем çывăхри колхозсенче 160 ĕçкунĕ ĕçлесе илсе, ĕçкунĕ çине тивекен тупăша оборона фондне хывнă. Унсăр пуçне канмалли кунсенче, урoксем хыççăн çывăхри колхозсене кайса ĕçлесе илнĕ 430 ĕçкунĕн тупăшне те оборона фондне панă. Комсомолецсемпе шкул ачисем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем нумай пухрĕç. Ку тĕлĕшпе колхозниксем хушшинче те ĕçлерĕç. «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума 1.500 тенкĕ пухса панă.

Комсомолецсемпе вĕренекенсем профсоюзпа комсомолăн Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулса иртекен йĕлтĕрлĕ кроссне лайăх хатĕрленсе кĕтсе илчĕç. Осоавиахимăн пуçламĕш организацийĕн председателĕ комсомолец Г. Сорокин тата военрук И. Кутузов юлташсем ĕçленипе вĕренекенсем хăйсем 60 мăшăр йĕлтĕр хатĕрленĕ. Кросса хутшăнакансем пурте медицина енĕпе тĕрĕслÿре пулнă. Кашни кун тенĕ пекех тренировкăсем туса ирттернĕ, вĕренекенсем шкула та йĕлтĕрсемпе çÿреççĕ.

Комсомолецсем çывăхри колхозсенче те тăрăшса ĕçлеççĕ. Аслă классенче вĕренекенсенчен чылайăшĕсем хăйсен тăван колхозĕсенче агитаторсем пулса ĕçлеççĕ, колхозсене çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ. 10-мĕш класра вĕренекен И. Кудряшов, çуллахи каникул вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çара кайнă вулав çуртĕн заведующийĕ вырăнĕнче ĕçлесе, вулав çуртĕн ĕçне вăрçă вăхăчĕ хушнă пек урăхлатса çĕнетрĕ. Вулав çуртĕнче кашни кунах, ирхине те, каçхине те пĕрле пухăнса радио итлессине организациленĕ, уйри ĕçсем вăхăтĕнче культмассăллă ĕçе лайăх туса пынă. Çав хушăрах Кудряшов «Пионер» колхозра 50 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ. Çавăн пекех Н Михайлов комсомолец та «Пионер» колхозра 60 ĕçкунĕ тунă, вăл лайăх агитаторсенчен пĕри пулса тăрать. Халĕ вĕсем, шкулта тăрăшса вĕреннипе пĕрлех, канмалли кунсенче колхоза çуракине хатĕрленме пулăшаççĕ: вăрлăхсем сортлаççĕ, çĕре çемçетмелли вырăнти имçамсене пухаççĕ. Кашни каçах бригадăсенче колхозниксене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа параççĕ, Хĕрлĕ Çарăн кулленхи çитĕнĕвĕсем çинчен каласа кăтартаççĕ, бригадăри стена хаçачĕсен редакторĕсем пулса ĕçлеççĕ. Комсомолец Г. Сорокин «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхозра 26 колхозникe ПВХО кружокĕнчен вĕрентсе кăларса, значоксем илме пулăшнă.

Халĕ шкулти комсомолецсем вĕренÿри çĕнĕ çитĕнÿсемшĕн, колхозсенче массăллă-ăнлантаруллă ĕçе татах та лайăхрах йĕркелесе, пĕтĕм колхозлă яла фронт интересĕсемшĕн ĕçлеме пулăшассишĕн мĕнпур вăйĕсене хурса тăрăшаççĕ.

Н. ЦВЕТКОВ.

Ăмăртура çамрăксем малта

КАНАШ. Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн вагонсем юсакан завод коллективĕ хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлнăçемĕн сарăлса пырать. Хальхи вăхăтра ăмăртура 13—14-мĕш номерлĕ цехсенче ĕçлекенсем малта пыраççĕ. Вĕсем сменăри нормăна яланах ирттерсе тултараççĕ. Куллен кун ытларах та ытларах продукци туса кăлараççĕ. Уйрăмăнах 14-мĕш номерлĕ цехри Лопатенко, Доронина токарьсем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Вĕсем кулленхи нормăна 200 процентран кая мар тултараççĕ.

— Пирĕн ĕмĕт— ĕç тухăçлăхне Хĕрлĕ Çар кунĕччен 300 процента çитересси, — тет Лопатенко юлташ, цехри комсомол организаци секретарĕн заместителĕ.

13-мĕш цехри йышлă станоксенчен улттăшĕн çине пĕчĕк хĕрлĕ ялавсем тирнĕ. Вĕсем — фронтовой станоксем. Çак станоксемпе цехри чи пултаруллă комсомолкăсем Рылина, Мокшина, Крупская, Волкова тата Гавай юлташсем ĕçлеççĕ. Вăрçăн малтанхи кунĕсенчен вара вĕсем хăйсен ĕç вырăнĕсене смена пуçланиччен чылай малтан тăраççĕ те гудок парасса кĕтмесĕр ĕçе тытăнаççĕ. Вĕсем фронтри пек хăвăрт ĕçлеççĕ. Çавăнпа вĕсен уйăхри ĕç тухăçлăхĕ 250 процента çитет.

Утильцехра ĕçлекен Павлюкпа Потапова строгальщиксем, Хĕрлĕ Çар уявĕ умĕнхи ăмăртăва пуçаракансем, цехри пур рабочисене те ăмăртăва чĕнсе, сменăри нормăна 250-шар процент тултарма пулчĕç. Халĕ вĕсем сменăри нормăна 300-шер процент тултарса пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çар кунне тивĕçлипе кĕтсе илес тесе, Быков ертсе пыракан слесарьсен бригади сменăри нормăна кашни кун 180-шар процент тултарса пыма сăмах панă. Бригада хăйĕн обязательствисене чыслăн пурнăçласа пырать, вăл кашни кун нормăна 200—250 процент тултарать.

Фронтовой бригадăсенчен январь уйăхĕнче Фернухин юлташăн бригади лайăх ĕçлерĕ. Вăл январь уйăхĕн планне 200 процента яхăн тултарчĕ. Çавăншăн Фернухин юлташăн бригадине заводри комсомол комитечĕ хăйĕн куçса çÿрекен ялавне пама йышăннă.

Т. ИВАНОВ.

ФРОНТА ХĔÇПĂШАЛ ТАТА БОЕПРИПАССЕМ ЫТЛАРАХ ПАРАР! Ÿкерчĕк çинче: Ленинградри Н-ски заводри хатĕр продукцин приемщици Е. В. Федорова юлташ хатĕр снарядсене йышăнать.

Г. ЧЕРТОВ фотоÿкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Вăрман хатĕрлевне ĕç вăйĕ ытларах памалла

КАНАШ. («Чăваш Коммуни» корр.). Районри колхозсене вăрман хатĕрлеме Канашпа Йĕпреç вăрман промхозĕсем çумне çирĕплетнĕ. Анчах вĕсенче пĕринче те ĕçе кирлĕ пек туса пыми çук. Çакă вăл 1941 çулти декабрĕн 10-мĕшĕпе 1942 çулти январĕн 20-мĕш хушшинчи ĕçсенчен те аванах курăнать. Çак вăхăтра Канаш вăрманпромхозĕнче ĕçлекен колхозсен 2.600 фестметр касса хатĕрлемелле, 3.400 фестметр турттарса кăлармалла пулнă пулсан, вĕсем 1.029 фестметр касса хатĕрленĕ, 552 фестметр турттарнă. Çапла вара вăрман касса хатĕрлес енĕпе 16,2 процент кăна, турттарас енĕпе 16,2 процент кăна тултарнă.

Ĕç çавнашкал япăх пынин сăлтавĕ чылай колхозсем вăрман хатĕрлевĕ çине ку таранччен те тивĕçлипе çавăрăнса пăхманнинче. Шаккăл ялсоветĕнчи Калинин ячĕпе тăракан колхозран вăрмана çуран 6 çын, лашапа 8 çын ямалла. Анчах кунтан декабрь уйăхĕнче пĕр çын та яман темелле. Январь уйăхĕнче те пĕр кун 2 çын, тепĕр кун 5 çын кăна тухса ĕçленĕ. Чакăç ялсоветĕнчи «Самолет» тата «Красноармеец» колхозсенчен ку таранччен пĕр çын та тухса ĕçлемен. Паянхи куна районри колхозсенчен пĕри те вăрман хатĕрлевне çирĕппĕн тытăнман, ĕç вăйĕ çителĕклĕ уйăрса паман. Январĕн 26-мĕшĕнче Канаш вăрман промхозĕнче çуран 600 çын, лашапа 800 çын ĕçлес вырăнне, çуран 136 çын, лашапа 59 çын ĕçленĕ.

Çаксем çинчен районри партипе совет организацийĕсен руководителĕсем пĕлсе тăраççĕ пулин те, ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Вăрман хатĕрлевĕнчи тепĕр пысăк çитменлĕх вăл—рабочисен ĕç тухăçлăхĕ начарри. Норма тăрăх кунне çиччен çуран ĕçлекенсен 2,4 фестметр хатĕрлемелле, лашапа ĕçлекенсен 1,2 фестметр турттармалла. Хальхи вăхăтра рабочисем çак нормăна хатĕрлес енĕпе 32 процент, турттарас енĕпе 50 процент тултарса пыраççĕ. Çакă вăл, чи малтан, вăрманта ĕçлекенсен ĕç кунне тĕрĕс организацилеменнинчен килет. Чылай çĕрте ĕçе ирхине 9—10 сехетре тухса каç пуличченех таврăнаççĕ. Уйкасри «Хĕрлĕ ялав» колхоз членĕсен ĕç кунĕ 5 сехет çеç шутланать, лашапа ĕçлекенсем 8 çухрăма кунне икĕ хутлас вырăнне пĕрре хутлаççĕ те вĕсен ĕç кунĕ вĕçленет те.

Канаш вăрманпромхозĕн руководителĕсем вăрман хатĕрлев ĕçне çителĕксĕр ертсе пыраççĕ. Вĕсем вăрмана ĕçленĕ çĕре кайса çÿресе, ĕçе йĕркелес вырăнне, кабинетра сводкăсем пустарса лараççĕ. Вăрманта ĕçлекенсем хушшинче политикăллă агитаци ĕçне кирлĕ пек организацилемен, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа социализмлă ăмăртăва пуçарман.

Ялхуçалăх артелĕн уставне çирĕп пурнăçласа пырар

Сталин юлташ колхозниксемпе колхозницăсене фронтпа çĕршыв валли ытларах та ытларах тырпул, аш-какай хатĕрлесе пама чĕнсе каланине пирĕн колхозниксем тивĕçлĕн пурнăçлаççĕ. Йĕпреç районĕнчи чылай колхозсем иртнĕ çул хăйсен государство умĕнчи парăмĕсене — тырăсемпе çĕрулмисене срокчченех парса татрĕç: сăмахран, «Заря», Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем, кăçалхи çулшăн та государствăна аванс шучĕпе тырăсем, çĕрулмисем параççĕ. Çавнашкалах Сĕнтĕр районĕнчи «Красное Сормово» тата «Свобода» колхозсем те государство умĕнчи иртнĕ çулти пур парăмсене те срокчченех парса татса, кăçалхи çулшăн аш-какай, сĕт-çу т. ыт. парăмсене татнă. «Парижская Коммуна» колхозри колхозниксем, иртнĕ çулти ялхуçалăх ĕçĕсене пĕлтĕрхи ноябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне ăнăçлăн туса çитерсе, государство умĕнчи парăмсене пĕлтĕрех парса татрĕç. Колхозăн 5 ферма. Вĕсем пурте хăйсен выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес планĕсене ирттерсе тултарнă.

Çĕрпÿ районĕнчи «Цивильстрой» колхозри колхозниксем оборона фондне 300 пăт тырă, пахча-çимĕçсем нумай пачĕç. Кашни колхозник хăйĕн хуçалăхĕнче Хĕрлĕ Çар валли пĕрер выльăх çитĕнтерсе самăртма тытăнчĕ. Ку тĕлĕшпе вĕсем республикăри пур колхозниксемпе колхозницăсене те хăйсем пек ĕçлеме чĕнчĕç. Колхозсемпе колхозниксем, вĕсен чĕнĕвне ырласа, нумай çĕрте халь Хĕрлĕ Çар валли выльăхсем çитĕнтерсе самăртаççĕ.

Çавнашкал çитĕнÿсем вĕсем пурте колхозсен сталинла законне—ялхуçалăх артелĕн уставне çирĕппĕн тытса пырса ĕçленипе пулчĕç. Ăçта артель уставне пăхăнса ĕçленĕ, çавăнта колхозниксем тухăçлă тырпул туса илнĕ, хăйсен государство умĕнчи обязательствисене те вăхăтра парса татнă.

Çапла пулин те, уйрăм колхозсем хăйсен уставне тивĕçлĕн пурнăçа кĕртсе пымаççĕ; ăна пăхăнмасăр, тепĕр чухне ăна пăсса ĕçлекен колхозсем те час-часах тĕл пулкалаççĕ. Шупашкар хулин территорийĕ çинчи «Красная Волга» колхозра колхоз председательне суйланă чухне суйлав йĕркисене пăснă. Председатель пулма колхозниксен пухăвĕнче Ишуткин кандидатурине тăратнă. Суйлама пултаракан 43 сасăран пухура уншăн пурĕ те 19 сасă çеç пулнă. Çапах та, ăна председатель тăвасшăн маррисен хисепĕ ытларах пулнă пулин те, Ишуткина колхоз председателĕ туса лартнă. Максим Горький ячĕпе тăракан колхозра Ивановпа Чечнев колхозниксене уставра пăхниччен пысăк штрафсем хурса тÿлеттернĕ.

Колхоз уставне пăсса ĕçлекен колхозсем уйрăмах Первомайски районра палăраççĕ. Сăмахран, «Октябрь» колхозра колхоз правленийĕ кашни колхозникĕн майăн 1-мĕш тĕлне çулсерен 50 ĕçкунĕ тумалла, тесе постановлени кăларнă. Çапла тунипе «Октябрь» колхозра СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральнăй Комитечĕ кашни колхозникĕн çулталăкне 80 ĕçкунĕнчен кая мар тумалла тесе йышăннă постановленине пăснă. Турхан ялĕнчи колхозра халĕ те транспорт инвентарĕсене, ут таврашĕсене пĕрлештермен. Нумай колхозсенче члена илес, колхозран кăларас ĕçе тĕрĕс тумаççĕ, ĕçкунĕсене тĕрĕс шута илсе пымаççĕ, ревизисем вăхăтра пулмаççĕ. «Октябрь», «Красный луч» колхозсенче, сăмахран, иртнĕ çулта пĕрер ревизи çеç тунă. Чылай çĕрте колхозниксене лайăх ĕçленĕшĕн хушса тÿлес ĕçе кирлĕ пек пурнăçламаççĕ.

Çав вăхăтрах райсовет исполкомĕсемпе райçĕрçпайĕсем тата районсенчи прокурорсем колхозсем хăйсен уставне мĕнле тытса пырса ĕçленине асăрхамаççĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕн Шупашкар хула Совечĕпе Первомайски район Совечĕн исполкомне колхозсенче ялхуçалăх артелĕн уставне пăсса ĕçлессине халех пĕтерме, райсовет исполкомĕсемпе райçĕрçпайĕсене пурне те колхозсем хăйсен уставне мĕнле пурнăçласа ĕçленине тĕрĕслесе пыма хушса хăварчĕ.

Çак ĕçрен колхозниксен хăйсен те аякра тăрса юлмалла мар. Артель уставне çирĕппĕн пурнăçласа пыни, ăна пăхăнса ĕçлени вăл—колхозсен çирĕплĕхĕ. Колхоз хăйĕн ĕçне ăнăçлăн туса пырасси çавăнтан килет те ĕнтĕ. Апла пулсан, ялхуçалăх артелĕн уставне çирĕппĕн тытса пымалла, ăна пăсакансене хирĕç кĕрешмелле.

М. ПРОХОРОВ, И. АНАНОВ.

Комсомолецсем—ăмăрту организаторĕсем

ÇĔМĔРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Древкомбинатри комсомолецсемпе çамрăксем тăван Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илме хатĕрленеççĕ.

Иккĕмĕш тата саккăрмĕш номерлĕ цехсенчи комсомолецсемпе çамрăксем, Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа сарăлса пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, комбинатри комсомолецсене хăйсем пек ĕçлеме чĕнчĕç.

«Пирĕн хисеплĕ Хĕрлĕ Çар фашистла тискер кайăксене хирĕç паттăррăн çапăçать, çĕнтерÿ хыççăн çĕнтерÿ туса пырать. Эпир, комсомолецсемпе çамрăксем, Хĕрлĕ Çар туса пыракан çĕнтерÿсемпе хавхаланса, Хĕрлĕ Çар XXIV çул тултарнине хамăрăн ĕçе лайăхлатнипе, фронта пулăшассине татах та вăйлатнипе кĕтсе илме пулатпăр, хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илетпĕр: хамăрăн ĕç нормисене куллен 150 процентран кая мар тултарса ĕçлеме, комсомол ĕçне вăйлатма, çар ĕçне тĕплĕн вĕренсе пыма сăмах паратпăр».

Комсомолецсемпе çамрăксем халь хăйсен обязательствисене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем хушшинче ĕç нормине 160—200 процент тултаракансем сахал мар. Столярсем Киселев, Кутырев, Ефимов юлташсем икшер норма тултараççĕ. Вĕсем январь уйăхĕнчи нормăна 6 кун малтан пурнăçларĕç. Çакăнпа пĕрлех вĕсем всевобуч подразделенийĕсенче çар ĕçне лайăх вĕренсе пыраççĕ.

Пĕррелĕш номерлĕ цехра комсомолка К. Данилова бригадир пулса ĕçлет. Бригада, вăтамран илсен, хăйне панă заданисене 150 процентран кая мар, хăшпĕр кунсенче 200 процента çити тултарать.

— Эпир кашниех икĕ çыншăн ĕçлеме пултаратпăр, мĕншĕн тесен технологи процесне лайăх вĕренсе çитнĕ, — тет Данилова юлташ.

Х. ЛИСИН.

Комсомол йышĕ ÿсет

СĔНТĔРВĂРРИ. Комсомол организацийĕсем союзра тăман çамрăксем хушшинче политикăллă ăнлантару ĕçне аван йĕркеленĕ çĕрте комсомолецсен йышĕ ÿсех пырать. Вăрçă кунĕсенче Сĕнтĕрвăрринчи вăтам шкулта — 9 çын, Шуркассинчи вăтам шкулта — 7 çын, Тутаркас колхозĕнче — 6 çын Ленинла—Сталинла комсомолăн ретне кĕчĕç.

Анчах комсомолăн хăшпĕр организацийĕсем çамрăксем хушшинче сахал ĕçлеççĕ. Çавăнпа та комсомолăн эрех заводĕ çумĕнчи, Сутчево ялсоветĕ çумĕнчи, «Парижская коммуна» артельри организацийĕсенче ÿсĕм çук. Ку организацисен çамрăксемпе тимлĕнрех ĕçлеме тытăнмалла.

А. РАЗИН.

Шкул валли вутă

КАНАШ. Вăтакас-Татмăшри туллимар вăтам шкулти учительсем январĕн 18-мĕшĕнче воскресник турĕç. Вĕсем шкул валли 45 кубометр вутă касса хатĕрлерĕç.

Т. ТУРХАН.

Çĕрулми вăрлăхĕсем хатĕрлер

Кăçалхи çул пирĕн çĕрулми нихăçанхинчен ытларах туса илмелле. Иртнĕ çултипе танлаштарсан, çĕрулми лартса хăвармалли план пирĕн республикăра кăçал 31 процент ÿсет. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçлас тесен, нименрен малтан пирĕн халь çĕрулми вăрлăхне çителĕклĕ хатĕрлемелле. Пирĕн республикăри нумай колхозсем çапла турĕç те ĕнтĕ. Вĕсем кĕркуннех вăрлăх валли çĕрулми çителĕклĕ уйăрса хăварчĕç те халь ăна тĕплĕн сыхласа упраççĕ. Çапах та пĕтĕм республикипе илсен, хамăра кирлĕ вăрлăха эпир çителĕклĕ хатĕрлеймерĕмĕр-ха. Паянхи кун тĕлне çĕрулми вăрлăхне эпир 71 процент çеç хатĕрлесе çитернĕ. Хăшпĕр районсенче çак ĕç чăтмалла мар япăх. Сăмахран, Калинински, Сĕнтĕр тата Красноармейски районсем çĕрулми вăрлăхне пурĕ те 17—18-шар процент çеç хатĕрленĕ. Улатăр, Канаш тата Çĕмĕрле районĕсенчи колхозсенче те вăрлăх валли çĕрулми çителĕклĕ уйăрса хуман. Канаш районĕнчи колхозсенчен пурĕ те 7 колхоз çеç хăйсем валли вăрлăхсем хатĕрленĕ. Ытти колхозсене илсен, пĕрисен — çитмест, теприсен — пачах çук. Пăрачкав районĕнче 3 колхозăн çĕрулми вăрлăхĕ пачах та çук, чылай колхозсен — çитмест.

Кирлĕ вăрлăха çителĕклĕ тупса хатĕрлемелле тата ăна халех тупмалла. Çавна эпир тума пултаратпăр. Кашни районрах çĕрулми нумай туса илнĕ колхозсем пур. Вĕсен çĕрулмийĕ вăрлăхран та ытлашши юлать. Çавăн пек колхозсем çĕрулми çителĕклĕ туса илеймен колхозсене ытти культурăсемпе çĕрулми улăштарса пама пултараççĕ. Тата эпир Лысенко академикăн паха сĕнĕвĕпе усă курма пултаратпăр. Ун сĕнĕвĕ тăрăх, эпир хамăр çиекен çĕрулми пуçĕсене каса-каса илсе, çĕрулми вăрлăхĕ нумай хатĕрлесе хăварма пултаратпăр. Шутласа пăхнă тăрăх, кашни рабочи, служащи е колхозник хăй çиекен çĕрулми пуçĕсене каса-каса хăварсан, хулара пурăнакан кашни 20—30 çын е 10—15 колхозник пĕр гектар çине лартмалăх вăрлăх хатĕрлеме пултарать.

Анчах Лысенкăн çак паха сĕнĕвĕпе пирĕн республикăра кирлĕ пек усă курма пĕлмеççĕ-ха, хăшпĕр районсенче, сăмахран, Элĕк, Вăрнар, Канаш тата Шăхасан районĕсенче çав сĕнÿпе пачах усă курмаççĕ.

Çураки çывхарса килет. Вăхăт сахал. Васкар. Çĕрулми вăрлăхне халех хатĕрлесе çитерер. Фронтпа çĕршыв валли кăçал татах та нумайрах çĕрулми тăвар.

Р. ЭСАНОВ.

Политпросвет учрежденийĕсен ĕçĕ хальхи вăхăтра

Совет халăхĕ Германи фашизмне хирĕç туса пыракан вăрçă вăхăтĕнче ялти политпросвет учрежденийĕсем — вулав çуртĕсем, колхоз клубĕсем, библиотекăсем пит те ответлă вырăн йышăнса тăраççĕ.

Отечественнăй вăрçăн малтанхи кунĕсенчен пуçласах политпросвет учрежденийĕсенчен чылайĕшĕсем, хăйсен умĕнчи задачăсене тĕплĕн ăнланса илсе, массăллă агитаци ĕçне çĕнĕ обстановкăна кура урăхлатса çĕнетрĕç. Вĕсем мĕнпур ĕççыннисене çĕршыв оборонин енĕпе тухса тăнă задачăсене пурнăçланă çĕре мобилизацилеме тытăнчĕç. Нумай вулав çурчĕсем, библиотекăсем, колхоз клубĕсем вăрçă вăхăтĕнче чăн-чăн агитаци пункчĕсем пулса тăчĕç; çав агитпунктсем урлă халăх хушшинче большевикла чăнлăх сăмахĕ сарăлать.

Етĕрне салинчи (Етĕрне р.) вулав çурчĕ кашни кунах хăйĕн залĕнче, колхозăн выльăх-чĕрлĕх фермисенче тата бригадăсенче политикăллă информацисем туса ирттерет. Вулав çурчĕ пĕтĕçтерсе тăракан актив колхозниксене часчасах паянхи кун хумхатакан ыйтусем тăрăх лекцисемпе докладсем туса парать. Çак ĕçсене вулав çуртĕн заведующийĕ Васильев юлташ хăй пуçарса пырать. Вулав çурчĕ колхозниксене ĕçри героизм мĕнле пулмалли çинчен вĕрентет. Производствăра чи лайăх ĕçлекенсен ячĕсене яланах хисеп хăми çине кĕртсе, вĕсен çитĕнĕвĕсемпе мĕнпур массăна паллаштарать. Кунпа пĕрлех вулав çуртĕнче справкăсем паракан сĕтел те пур, унта колхозниксем нумай тĕрлĕ ыйтусемпе пыраççĕ. Справка сĕтелĕ вĕсене пурне те тĕплĕн ăнлантарса парать.

Красноармейски районри вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсем те питĕ пысăк ĕçсем тăваççĕ. Вăрçă пуçланнăранпа районри вулав çурчĕсемпе клубсем çумĕнчи агитаторсем 3.700 хут ытла вулавсем, докладсем, калаçусем туса ирттернĕ; çав калаçусемпе докладсенче 30.000 ытла çын пулнă. Кунсăр пуçне тата Сталин юлташăн ноябрĕн 6-мĕшĕнчи докладне 238 пухура вуласа е каласа панă, çав пухусенче 13.186 çын пулнă. Вулав çурчĕсемпе колхоз клубĕсенче ялти интеллигенци активлăн ĕçлет. Пуринчен ытла учительсем тăрăшаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче вĕсем районĕпе 675 доклад туса панă. Çав хушăрах тăшман сывлăшран тапăнниччен сыхланмалли правилăсене районĕпе 9.826 çынна вĕрентсе кăларнă. Кушарти вулав çурчĕн заведующийĕ учитель Скворцов юлташ хăй пăхса тăракан вулав çуртне чăн-чăн агитпункт туса хунă.

Çĕмĕрле районĕнчи политпросвет учрежденийĕсем колхозниксем валли «Ыйтусемпе ответсен» хăми организациленĕ. Ыйтусемпе ответсен хăми пĕтĕм халăха çавтери интереслентерет. Колхозниксем паракан ыйтусем тĕрлĕрен пулаççĕ, политпросвет учрежденийĕсем çав ыйтусем çине тĕплĕ те тулли ответсем параççĕ. Кунта та справка сĕтелĕсем аван ĕçлеççĕ. Сĕнтĕр районĕнчи вулав çурчĕсем юлашки икĕ уйăх хушшинче колхозниксене 4.346 справка панă.

Çĕрпÿ районĕнче Çĕньял, Чурачăк, Тĕнсĕр вулав çурчĕсем аван ĕçлеççĕ. Ялти интеллигенцин, колхозниксен, советсен активне тата коммунистсемпе комсомолецсене хăйсем тавра явăçтарса, вĕсем халăх хушшинчи массăллă-политикăллă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Политикăллă ĕçе çапла ăнăçлăн йĕркеленине пула, асăннă ялсенчи колхозсем çĕршыв оборонине çирĕплетме активлăн пулăшаççĕ. Çакăн пек лайăх ĕçлекен политпросвет учрежденисене ытти районсенче те сахал мар тупма пулать. Уйрăмăнах Ишлей, Улатăр, Хĕрлĕ Чутай, Çĕмĕрле районĕсенчи чылай вулав çурчĕсемпе библиотекăсен ĕçне лайăх енчен палăртмалла.

Политпросвет учрежденийĕсенче ĕçлекенсем хушшинче вăрçă кунĕсенче пултаруллă работниксем нумай палăрчĕç. Çав работниксем хушшинчен талантлă агитаторсем, массăна организацилеме пĕлекен çынсем ÿссе çитĕнеççĕ. Кĕçĕн Явăшри (Çĕрпÿ р.) библиотека заведующийĕ Трофимова, Иртеменкассинчи (Вăрнар районĕ) вулав çурчĕн заведующийĕ Зайцев тата ытти чылай юлташсем хăйсен ĕçĕсене юратса, тимлĕн туса пынипе хуçалăхлă-политикăллă кампанисене ăнăçлăн ирттерме пулăшаççĕ. Трофимовăпа Зайцев пек агитаторсем масса хушшинче пысăк авторитетпа усă кураççĕ: халăх вĕсене хисеплет, вĕсем каланисене итлет, вĕсем пуçаракан ĕçсене хапăлласа йышăнать.

Çапла, малта пыракан политпросвет учрежденийĕсем хăйсен умĕнчи задачăсене чыслăнах пурнăçласа пыраççĕ. Вĕсем хăйсен пĕтĕм ĕçне вăрçă вăхăтĕнче кирлĕ пек урăхлатса çĕнетрĕç. Анчах та çак хушăрах хăшпĕр вулав çурчĕсем, библиотекăсем, культура çурчĕсем тата колхоз клубĕсем çаплах начар ĕçлеççĕ-ха. Вĕсем хушшинче паян кунччченех мирлĕ вăхăтри шухăш-кăмăлсемпе ĕçлекенсем те пур. Илĕпĕр Сĕнтĕр районĕнчи Муркавăшпа Ювачовăри вулав çурчĕсене. Унта вулав çурчĕсем çумĕнчи советсем ĕçлемеççĕ, политинформаци ĕçĕсене тата коллективлăн радио итлессине организацилемен, массăллă агитаци ĕçĕ начар е çукпа пĕрех, çавăн пекех тата справкăсем паракан сĕтелсем те ĕçлемеççĕ. Çавнашкалах район центрĕсенчи, уйрăмăнах Калининăпа Сĕнтĕр районĕсенчи, культура çурчĕсем те начар ĕçлеççĕ. Ку çитменлĕхсем, паллах, пĕр енчен — вырăнти çутĕç пайĕсемпе ялсовет исполкомĕсем политпросвет учрежденийĕсем çине çавăрăнса пăхманнинчен, тепĕр енчен тата çав политпросвет учрежденийĕсенче юрăхсăр çынсем ларнинчен килеççĕ. Вырăнти çутĕç пайĕсен ĕçлеме пултарайман е ĕçлеме ÿркенекен работниксене тахçанах ĕçрен кăларса, вĕсен вырăнне ĕçе юратакан пултаруллă работниксене лартмалла пулнă. Анчах та вĕсем ку тĕлĕшрен васкамаççĕ.

Вулав çурчĕсем лайăх ĕçлеме пултарайманни час-часах тата вĕсене ялсовет исполкомĕсем кирлĕ условисем туса паманнинчен те килет. Сăмахран, Муркавăшри вулав çурчĕ ялсовет çуртĕн çынсем иртсе çÿремелли пĕчĕк пÿлĕмĕнче çеç вырнаçса тăрать.

Хăшпĕр ялсовет исполкомĕсем политпросвет учрежденийĕсен çурчĕсене урăх ĕçсем валли йышăнса илеççĕ. Мемĕшри вулав çуртне (Ишлей р.), Упнерти вулав çуртне (Вăрнар р.), Янташри колхоз клубне колхозсем çĕрулми е тырă хурса усрамалли складсем туса хунă. Кун пек йĕркесĕрлĕхсем Кувакино районĕнче тата ытти çĕрте те сахал мар тупăнаççĕ. Çапла вара хăшпĕр ялсоветсем, колхозниксем хушшинчи политикăллă ĕçе вăйлатма политпросвет учрежденийĕсемшĕн пур условисене те туса парас чухне, вĕсене хăйсем ĕçре чăрмантарса пыраççĕ. Кунашкал йĕркесĕрлĕхсене вырăнти çутĕç пайĕсемпе ялсоветсен çине тăрсах пĕтермелле.

Вăрçă вăхăтĕнче политпросвет учрежденийĕсене ĕçлеме лайăх условисем туса парасси çине районри Совет исполкомĕсен те тивĕçлипе çавăрăнса пăхмалла. Районри Совет исполкомĕсем çавăн пек тăрăшнине эпир сахал куратпăр-ха.

Политпросвет учрежденийĕсен—вулав çурчĕсен, библиотекăсен, колхоз клубĕсен тата культура çурчĕсен чăннипех те большевикла агитацие саракан центрсем пулса тămалла, вĕсен халăха политикăллă воспитани парассишĕн тăрăшмалла. Районсенчи çутĕç пайĕсен çак учрежденисене чăннипех те ĕçлеме пултаракан, ĕçре сăнаса пĕлнĕ хастарлă çынсене çеç лартмалла. Ун пек çынсем, хăйсем тавра ялти активна — коммунистсене, комсомолецсене, партипе совет ĕçне юратакан учительсене тата ыттисене те пĕтĕçтерсе, вĕсем пулăшса тăнипе пит те пысăк ĕçсем тума пултараççĕ.

Политпросвет учрежденийĕсем Ленин—Сталин партийĕн чăнлăх сăмахĕсене саракан чăн-чăн агитпунктсем пулччăр. Вĕсем кирек мĕнле йывăр вăхăтра та массăна çав йывăрлăхсене хирĕç кĕрешмешкĕн организацилеме пултарччăр. Эпир çавăн пек ĕçлекен политпросвет учрежденийĕсене çеç хăйсен ĕçĕсене паянхи вăрçă вăхăтĕнче кирлĕ пек урăхлатса çĕнетнĕ теме пултаратпăр. Анчах та çав агитпунктсем лайăх ĕçлеччĕр тесен, партин организацийĕсемпе Совет исполкомĕсем енчен те вĕсем çине çителĕклĕн çавăрăнса пăхни кирлĕ. Политпросвет учрежденийĕсене йĕркеллĕн ĕçлеме мĕн кирлĕ — çавсене пурне те туса памалла.

П. МЕДВЕДЕВ.

Чăваш АССР Наркомпросĕ çумĕнчи политпросвет ĕçĕсен управлени начальникĕ.

Совет информаци бюровĕнчен

Февралĕн 9-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

* * *

Селезнев юлташăн чаçĕнчи артиллеристсем (Хĕвеланăç фрончĕ), противникăн аэродромĕ çине хăватлăн персе тăрса, нимĕçсен 10 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фрончĕн участокĕсенчен пĕринче кĕрешекен пирĕн чаçсем, противника çаплах хĕссе пырса, пĕр кун хушшинче халăх пурăнакан 3 пункта йышăнса илнĕ. Нимĕçсен фашистла войскисем, совет войскисен наступленине чарса лартма хăтланса, тем сарлакĕш вырăнсене минăсем лартса тухаççĕ тата оборонăллă ытти чăрмавсем тăваççĕ. Старший лейтенант Семенюкăн сапернăй подразделенийĕ çавăн пек милăсем лартса тухнă вырăна тупнă, унăн талккăшĕ 2 километр çурă пулнă. Тăшман персе тăнине пăхмасăрах, çав минăсем лартса тухнă вырăна саперсем 5 тĕлте тасатнă та пирĕн чаçсене малалла кайма çул уçса панă. Çавăнти пĕр пунктра кăна хăюллă саперсем юр айĕнчен 2600 противотанковăй мина кăларнă.

* * *

Боецсен 30 çынран тăракан группи, старший лейтенант Шипунов ертсе пынипе, пĕр çапăçура противникăнне 2 миномет, 5 пулемет, 8 автомат тытса илнĕ, тăшманăн 20 салтакне вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Калинин партизанĕсен «Дед» юлташ ертсе пыракан отрячĕ нимĕç оккупанчĕсен тылĕнче хăюллăн кĕрешет. Юлашки вăхăтра çак отрядри партизансем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 179 çынна пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен танксене хирĕç пемелли 5 туппине, 10 пулеметпе, 30 автоматне, 87 винтовкине, 50 пистолетне, йĕнерленĕ 10 лашине тытса илнĕ, нимĕçсен чаçĕн штабне çапса аркатнă.

* * *

Пирĕн войскăсем нимĕçсен 290-мĕш пехотнăй полкĕн командирĕ январĕн 28-мĕшĕнче панă приказа тытса илнĕ. Приказра çапла каланă: «Юлашки вăхăтра дисциплина арканнине тата чаçсем шухăш-кăмăл тĕлĕшĕнчен япăхланнине кăтартакан тĕслĕхсем нумайланса пыраççĕ: 1) Çапăçу вăхăтĕнче позицирен вăхăтсăрах, çителĕклĕ сăлтавсемсĕрех пăрахса тухаççĕ. Позицисене панă чухне хĕçпăшалсем пăрахса хăвараççĕ, аманнисене пуxса тухмаççĕ; 2) марш вăхăтĕнче салтаксем пĕчченшерĕн те, ушкăнăн-ушкăнăн та, ирĕк ыйтса тăмасăрах, хăйсен хĕçпăшалĕсене пăрахсах марш колоннисенчен уйăрălса тухаççĕ». Полк командирĕ офицерсене «хăйсен аллинчи пур средствăсемпе те усă курса çакăн пек положение пĕтерсе хума» приказ парать.

* * *

Нимĕçсен 143-мĕш горно-егерьски полкĕнчи 6-мĕш ротăран пирĕн енне каçнă салтак Алоид Маттерсберген çапла пĕлтернĕ: «Икĕ эрне каярах постра пĕр сехет тăрсан манăн урасене тăм илсе ячĕ. Манăн постра татах тепĕр сехет тăмалла пулнă пулин те, эпĕ чăтаймарăм — кукленсе лартăм. Çакăн çинчен рота командирĕ лейтенант Цаунер пĕлсен, мана: çавăншăн сана военнăй суд аллине паратпăр, терĕ. Мĕншĕн те пулин айăпа кĕнĕ салтаксем нимĕн хыпарсăр сухални çинчен те пĕлтеретĕп эпĕ. Çапла, 8-мĕш ротăри салтак Зоцек сухалчĕ. Унăн урисене тăм илсе янăччĕ, çавăнпа вăл унтер-офицер кухня валли шыв илсе килме хушнине итлемен. 9-мĕш ротăри ефрейтор та çаплах сухалчĕ. Унăн хушамачĕ Зегер пулас. Шартлама сивĕ тăнă пирки вăл высота тайлăкне миномет вырнаçтарса лартма хушнине итлемен. Çавăнпа та мана рота командирĕ иккĕмĕш хут хăй патне пыма чĕнсен, эпĕ ротăн командир пункчĕ патнелле мар, вырăссем еннелле кайрăм. Сирĕн боецсене курсан, эпĕ çийĕнчех алăсене çĕклерĕм те хамăн винтовкăна патăм».

* * *

Хамина хулинчи (Финляндия) военнăй суд финсен çарĕнчен тарнăшăн 17 салтака персе пăрахмалли приговор йышăннă. Приговора пурнăçа кĕртнĕ.

* * *

Кастельветрано—Алькамо хушшинчи чугунçул çинче (Италия) нимĕç салтакĕсене турттарса пыракан çар эшелонĕ сирпĕнсе кайнă. 15 вагон арканнă, 135 гитлеровец вилсе тата аманса стройран тухнă.

Çуракине большевикла хатĕрленер

Çителĕксĕр хатĕрленнине палăртрĕç

КАНАШ. (Телефонпа, хамăр корр.). Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксен пухăвĕнче Кольцовка колхозникĕсем чĕнсе каланине сÿтсе-яврĕç тата хăйсем çуракине мĕнле хатĕрленнине пăхса тухрĕç.

Пухура тухса калакансем пурте колхоз çуракине çителĕксĕр хатĕрленнине палăртрĕç. Паянхи куна колхозăн çĕрулми вăрлăхĕ 240 центнер, вика вăрлăхĕ 43 центнер тата кок-сагыз вăрлăхĕ 6 гектар çине акса хăварма çитмест. Ялхуçалăх машинисене юсама тытăннă, анчах ку ĕç те çителĕксĕр пулса пырать. Кĕл колхозĕпе те 36 центнер çеç пухнă, уя тислĕк 150 лав кăна кăларнă, удобренисем пачах кÿрсе килмен.

Колхозниксем Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне ырларĕç, хăйсен колхозĕнче çуракине хатĕрленме халех тытăнса, Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне паллă çитĕнÿ тума пулчĕç.

Чапаев ячĕпе тăракан колхозра та, Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне пичетленĕ хаçата илсенех, Н. Кириллова бригадир хăй бригадинчи колхозниксен пухăвне туса ирттерчĕ. Вĕсем Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сÿтсе-явнă май, хăйсем çуракине мĕнле хатĕрленнине пăхса тухрĕç. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе Кириллова бригади колхозри ытти бригадăсенчен малта пырать. Бригадăра плугсене, урапасемпе сÿресене пурне те юсанă, ут таврашсене хатĕрлесе çитернĕ, сеялка хатĕр. Халь бригада вăрлăхсем сортлать. Паянхи куна çитсе вăрлăхсем пурĕ 55 центнер тасатнă.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе бригада ытти бригадăсене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕ, хăйсем Хĕрлĕ Çар кунĕ тĕлне ку енĕпе пур ĕçсене те туса çитерме пулчĕç.

Т. ИВАНОВ.

Колхозниксен тимлĕхĕ ÿсет

ÇĔРПУ. (Телефонпа, хамăр корр.). Колхозсенче халь, Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сÿтсе-явнă май, çуракине хатĕрленес ĕç вăйлансах пырать.

«Союз» колхозра Кольцовка колхозникĕсен чĕнĕвне сÿтсе-явнă хыççăн вăскасах вăрлăхсене сортлама тытăнчĕç. Çак иртнĕ кунсенче пурĕ 2 тонна вăрлăх тасатрĕç, 30 центнер пăрса вăрлăхĕ алăпа суйларĕç. Ку ĕçре уйрăмах Д. Ефимов, А. Кузьмин тата А. Андреев колхозниксем тăрăшса ĕçлерĕç.

Вăрлăхсене сортланă вăхăтрах ытти ĕçсене те тимлĕн туса пыраççĕ. Нумаях пулмасть 14 плуг юсаса пĕтерчĕç, уя 250 лав тислĕк кăларчĕç, çĕнĕрен тата 2 гектар çинче юр тытмалла турĕç.

«Красный бригадир», «Свет» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче те халь çуракине хатĕрленес ĕç вăйланчĕ.

Г. ПЕТРОВ.

Мĕншĕн вĕсем пек хатĕрленместпĕр

ВАРНАР. Кольцовкăри колхозпа эпир кÿршĕллĕ пурăнатпăр, вĕсен кулленхи ĕçне ялан пĕлсе тăратпăр. Вĕсем паянхи кун тĕлне çуракине йăлтах хатĕрленсе çитнĕ. Пирĕн те вĕсенчен юлмалла мар пек, вĕсенчен пример илсе çуракине тивĕçлĕн хатĕрленмелле пек. Анчах пирĕн Упнер ялĕнчи колхоз çуракине ку вăхăта çитсе те хатĕрленме тытăнман. Плугсемпе ялхуçалăх машинисем ăçта май килнĕ унта, юр айĕнче сапаланса выртаççĕ. Колхозăн хăйĕн триер пур. Вăл ĕçлемест. Çав вăхăтрах вăрлăхсем таса мар. Вĕсене лайăх упрамаççĕ.

Колхозра ĕçleme пултаракансем 200 çынна яхăн. Вĕсенчен колхоз ĕçне пурĕ те 20—30 çын кăна тухать. Çапла ĕçленипе колхозра халь те тырпул çапса пĕтермен.

Колхоз председателĕ А. Алексеев хăй те колхоз ĕçĕшĕн тăрăшмасть. Колхоз ĕçĕ яланах хăй тĕллĕн пулса пырать. Малашне кунашкал ĕçленине чăтма çук.

С. ПУДАКОВ.

Хĕрлĕ Çара тăрăшса пулăшаççĕ

КАНАШ, («Чăваш Коммуни» корр.). Нимĕç оккупанчĕсене хирĕç кĕрешме районри ĕççыннисем Тăван Хĕрлĕ Çара татти-сыпписĕр пулăшса тăраççĕ. Çак кунсенче районри склада Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли çĕлĕрен 452 тир, 50 килограмм çăм, вуншар мăшăр алшиш, носкисемпе ăшă кĕпе-йĕмсем леçсе пачĕç.

Мухтавлă Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленнĕ май ялсовет исполкомĕсем çумĕнчи Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пуxса хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем хăйсен ĕçне тепĕр хут вăйлатрĕç. Юлашки эрнере Шаккăл ялсоветĕнчи комисси 67 тир, 2 килограмм çăм, 5 м[illegible] 5 метр пир пухрĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхоз 9 тир, 5 мăшăр алшиш, 5 мăшăр чăлха, Доронин ячĕпе тăракан колхоз 20 тир, çăм, çĕлĕксем, алшишсем пуxса пачĕ. Çавăн пекех «Соревнование», «Коминтерн», М. Горький ячĕпе тăракан колхозсем те Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем тăрăшса пухаççĕ.

Хусан чугунçулĕн Канаш станцийĕнче ĕçлекенсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 15 комплект ăшă кĕпе-йĕм çĕлесе панă. Халĕ вĕсем боецсем валли ватка пусса 10 пиншак çĕлеттереççĕ.

Халăх пуxса панă тирсемпе çăмран Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем хатĕрлес ĕçре хулари индпошив мастерскойĕпе инвалидсен «Красный воин» промартелĕ лайăх ĕçлеççĕ.

Нефть промышленноçĕн работникĕсене наградăлани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, нефть кăларассине, оборонăна кирлĕ нефтепродуктсен тата боеприпассен производствине ÿстерес тĕлĕшпе правительство панă заданисене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн ССР Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе нефть промышленноçĕнчи работниксен пысăк группине наградăланă.

Ленин орденĕпе 60 çынна наградăланă; вĕсен шутĕнче «Таганрогнефть» трестăн пăралас тĕлĕшпе ĕçлекен конторин лавальнăй мастерĕ Али Заман Ага Дадаш, Азербайджанри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕн виççĕмĕш секретарĕ Азиз Мамед Киримович Алиев, «Молотовнефть» трестăн управляющийĕ Мирза Ага Бабаевич Бабаев, Азербайджанри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕн секретарĕ Мир-Джафар Абасович Багиров, Нефть Промышленноçĕн Халăх Комиссарĕн заместителĕ Николай Константинович Байбаков, «Орджоникидзенефть» трестăн иккĕмĕш промысла заведующийĕ Антонина Григорьевна Бакулина, «Орджоникидзенефть» трестăн 3-мĕш промысла мастерĕ Сона Асакулла Кизы Гулиева, Азербайджанри Коммунистсен (большевиксен) Партин Молотовски райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Амаяк Оганçсович Давыдов, «Кировнефть» трестăн пăралас тĕлĕшпе ĕçлекен конторин пăралакан мастерĕ Мирза Оглы Дарья Кули Бала, ВКП(б) Чечено-Ингуш обкомĕн секретарĕ Виктор Александрович Иванов, Грознефтекомбинат начальникĕ Василий Никитич Кочергов, «Бугурусланнефть» трестăн управляющийĕ Степан Иванович Улыбкин, «Азнефтезаводы» трестăн Андреев ячĕпе тăракан заводăн 5-мĕш номерлĕ цех очистителĕ Гюль Ага Кафар Мехти-Заде, «Орджоникидзенефть» трестăн пăралас тĕлĕшпе ĕçлекен конторин пăралакан мастерĕ Баба Кафар Оглы Мурадов, «Малкобекнефть» трестăн управляющийĕ Иван Иванович Негоднев, «Азизбековнефть» трестăн пăралас тĕлĕшпе ĕçлекен конторин пăралакан мастерĕ Михаил Петрович Степанов, Азербайджанри Коммунистсен (большевиксен) Партин Центральный Комитечĕн нефть тĕлĕшпе ĕçлекен секретарĕ Ахад Алекпер Оглы Якубов тата ыттисем те.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе — 150 çынна, **«Знак почета»** орденĕпе — 338 çынна, **«За трудовую доблесть»** медальпе — 345 çынна, **«За трудовое отличие»** медальпе — 420 çынна наградăланă.

(ТАСС).

Танксем тăвакан Промышленность Халăх Комиссариачĕн Сталинградри трактор заводĕнче ĕçлекен работникĕсене наградăлани

СССР Верховный Совет Президиумĕн Указĕ тăрăх, танксемпе танк моторĕсем туса кăларас тĕлĕшпе правительствăн заданийĕсене кăтартуллăн пурнăçа кĕртнĕшĕн Танксем тăвакан Промышленность Халăх Комиссариачĕн Сталинградри трактор заводĕнче ĕçлекен работниксен группине наградăланă.

Ленин орденĕпе çаксене наградăланă: мастера **А. И. Бондарева**, Танксем тăвакан Промышленность Халăх Комиссарĕн заместительне **А. А. Горегляда**, 264-мĕш №-лĕ заводăн мастерне **В. П. Ипатова**, цех начальникне **Л. Е. Македа**.

Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕпе 28 çынна наградăланă.

Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕпе — 28 çынна;

«Знак почета» орденĕпе — 40 çынна;

«За трудовую доблесть» медальпе — 72 çынна;

«За трудовое отличие» медальпе — 76 çынна наградăланă.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ Англире пулни çинчен Англири хаçатсем мĕн çыраççĕ

ЛОНДОН, февралĕн 8-мĕш. (ТАСС). Англипе Совет профсоюзĕсен Комитечĕ гитлерла Германия пусмăрланă çĕршывсенчи рабочисемпе работницăсем патне чĕнсе калани çинчен çырса, «Таймс» хаçат хăйĕн умстатьинче: çав чĕнÿ вăл Англипе Совет профсоюзĕсен ирĕклĕхшĕн пыракан пĕрлĕхлĕ кĕрешĕвĕнче пĕр-пĕринпе таччăн пĕрлешнин çĕнĕ тапхăрĕ пулса тăрать, тесе палăртать. Хаçат çав чĕнĕве «Гитлеровецсен пусмăрлăхĕ айĕнче асапланакан Европăри çĕршывсенчи халăхсене шанăç паракан, хавхалантаракан хыпар» тесе хаклать.

Совет профсоюзĕн делегацийĕ хăй Англи тăрăх курса çÿренĕ хыççăн мĕнле шухăшлани пирки Шверник юлташ пресс-конференцире калани çинчен çырса, хаçат «Совет делегацийĕ çак уйăха Англире усăллăн ирттернĕ» тесе палăртать. Шверник пичет представителĕсемпе ирттернĕ калаçура Англири ĕççыннисен арçынсемпе хĕрарăмсен шухăш-кăмăлĕ çÿлте тăнине ырланă. Делегатсене пур çĕрте те сума суса, хапăлласа кĕтсе илнĕ, çапла вара делегатсем Англипе вырăссен союзĕ çине Англи халăхĕ ăшă кăмăлпа ырласа пăхнине ĕненсе илсе Российăна таврăнаççĕ. «Хамăрăн союзниксемпе çавнашкал курнăçса калаçса татăлнине питĕ те мухтамалла», — тет хаçат. Çав вăхăтрах Шверник юлташ нимĕн пытармасăр уççăнах каласа панишĕн ÿпкелешме кирлĕ маррине те кăтартса парать хаçат. «Делегатсем Англи производствине хăйсем патĕнче усă куракан майсемпе критиклерĕç, пирĕн усă курмасăр выртакан резервсем çавтери нумайри çинчен вĕсем каланине итлеме хавас, çав критика вăл туслă пурăннинчен килекен тата хăйсен чăн-чăн шухăшĕсене çеç каласа паракан критика. Çав критика вăл хамăр тĕллеве пурнăçлассишĕн хамăрăн мĕнпур вăйсене пуxса, çĕнтерÿ тăвас куна хăвăртлатас ĕмĕтрен тухса тăрать. Çакă вăл ответлăхсăр критика мар. Çар производствин министрĕн, паллах, совет делегацийĕ пĕтĕçтерсе каланисене чи малтан тĕпчесе вĕренмелле, ĕçе ăçта кирлĕрех, çавăнта лайăхлатмалла», тесе çырать хаçат хăйĕн умстатьинче.

Совет профсоюзĕсен делегацийĕ калани çинчен çырса, «Стар» хаçатăн умстатьинче: «Шверник критика майĕпе асăрхаттарса каланисене пирĕн йышăнас пулать, мĕншĕн тесен вĕсем туслăн сăнаса вĕреннĕ хыççăн пĕтĕм чĕререн тÿрĕ кăмăлпа каланă сăмахсем пулса тăраççĕ,» тесе палăртнă.

Форугипе Черчилль пĕр-пĕрин патне телеграммăсем яни

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, СССР, Великобритани тата Иран хушшинчи союзлă договора алă пуснă май Иранăн премьер-министрĕ Форугипе Черчилль пĕр-пĕрин патне телеграммăсем янă. Форуги хăйĕн телеграмминче çак договор «икĕ çĕршыв хушшинчи авалхи туслă çыхăнусене тата пĕр-пĕрне лайăх ăнланса пурăннине» татах та вăйлатса çирĕплетессе шанатăп»,— тенĕ.

Черчилль Форуги телеграмми çине ответлесе панă телеграммăра союзлă договор çинчен çапла каланă: «Çакă вăл—Иран, Великобритания тата СССР пĕрлĕхлĕ тĕллевпе тата пĕр-пĕрне усă тăвас шутпа хăйсем çине паллă обязательствăсем илсе малтанхи хут пĕрлешни пулать», — тенĕ.

Квислинга „премьер“ туса хуни Норвеги халăхне кÿрентерет

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 6-мĕш. (ТАСС). Швецире тухса тăракан хаçатсем Квислинга «премьер-министр» туса хуни Норвеги халăхне хытă кÿрентерни пулса тăрать, тесе çыраççĕ.

«Дагенс нюхетер» хаçат çапла çырать: «Квислинг вăл ĕлĕкхи пекех оккупантсене пăхăнса тăрать, ĕлĕкхи пекех хăйĕн халăхĕшĕн ют пулса тăрать», тет. Вăрçăллă оккупаци çаплипех хăварнă вăхăтра «çĕршывăн никама пăхăнманлăхĕ» çинчен каланине хаçат çавтери ирсĕр мăшкăл тесе шутлать. Гитлерăн наместникĕ Тербовен ĕлĕкхи пекех Норвегире юлать.

Квислинг Швеципе çыхăнма хăтланса пăхни çинчен каласа (çапла хăтланса Квислинг «хăйне йышăнтарасшăн пулнă пулас»), «Свенска Моргонбладет» хаçат çапла çырать: «Ютçĕршыв держави пулăшнипе лартнă правительствăна халăх, кивĕ, законлă правительство пур çĕрте, йышăнасси вăл нихăçан та пулман. Çитменнине тата кунта хăй хыçĕнче халăх мар, пĕр пĕчĕкçеç ушкăн кăна тăракан çĕнĕ «правительство» çинчен сăмах пырать».

«Гетеборгс хандельстиднинг» хаçат çапла çырать: «Квислинга ăна Берлин кăмăлланипе «премьер» туса хунă. Швеци халăхĕ ăна йышăнмасть, ăна кураймасть. Квислинг режимĕ асаплантарса вĕлернĕ норвежецсене халăх ялан асра тытĕ», тет.

«Паранна çĕршывăн «правителĕ» пулма халăх курайман çынна Квислинга лартни мĕнпур норвежецсен чи лайăх туйăмĕсене кÿрентерет», тесе çырать «Арбедет» хаçат.

Англи авиацийĕ Брест çине тапăннă

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 7-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Брестри доксем çине вĕçсе пырса тапăннă.

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăхри Хĕвелтухăçĕнчи командованийĕ кăларнă черетлĕ коммюникере çапла каланă: çапăçусем икĕ енчен те патрульсен ĕçне вăйлатнинче тата артиллери хире-хирĕç персе тăнинче кăна палăрнă. Англи авиацийĕ пит те ăнăçлăн кĕрешнĕ. Истребительсемпе вăтам бомбардировщиксем малти районсенче тăшманăн чылай грузовикĕсене пĕтерсе тăкнă, çав вăхăтрах Англич йывăр бомбардировщикĕсем противник коммуникацийĕн тĕп линийĕсем çинчи чылаях инçетри темиçе объектне ăнăçлăн атакăланă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен çар министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: Филиппинра Японин йывăр артиллерийĕ Манила заливĕн кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕнчи позицисенче вырнаçнă та виçĕ сехет хушши Америка войскисен укреплениййĕсем çине персе тăнă. Çав артиллери пуринчен ытла Друм, Миллс тата Хюджес фрончĕсем çине персе тăнă. Çапах та материальнăй сиенсем тăвайман.

Батаан çурутравĕ çинче Японин пехоти юлашки 24 сехет хушшинче пысăк активлăх кăтартман. Америка истребителĕсем Японин пĕр бомбардировщикне персе антарнă, хăйсен нимĕнле сухатусем те пулман.

Голланди Индийĕнче Бали утравĕн районĕнче (Явăран хĕвелтухăç енче) Америкăн 8 самолетне Японин чылаях йышлă истребителĕсем атакăланă. Америка авиацийĕ японецсен сахалтан та 3 самолетне персе антарнă. Америкăн пĕр самолетне сиенленĕ, тепĕр самолет базăна таврăнман.

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Англин Сингапурти командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Япони артиллерийĕ Джохор проливĕ урлă Сингапур утравĕн çурçĕр пайĕ çине вăйлăн пеме пуçланă. Хăшпĕр ишĕлÿсем пур, анчах жертвăсем çук. Енер Сингапур çине вĕçсе пырса тапăннă чухне сывлăшри çапăçура Англи истребителĕсем японецсен 2 бомбардировщикне çапса антарнă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Голланди Индийĕн флочĕ çапăçăва кĕме яланах хатĕр тăрать, японецсем ку флот çинчен урăхла калани вăл суя хыпар. Çав флот Японин пĕр крейсерне путарнă, теприне сиен кÿнĕ.

Февралĕн 6-мĕшĕнче Голланди Индийĕн авиацийĕ Борнео утравĕн хĕвеланăç çыранĕ çывăхĕнче Японин пĕр пысăк транспортне атакăланă. Йывăр бомба транспорт çине тĕл лекнĕ, тепĕр бомба пароход çывăхĕнче çурăлса кайнă, судно шыва путма пуçланине палăртнă.

Флот командующийĕ çакăн пек сведенисем илнĕ: Амбоина утравĕ çывăхĕнче (Целебесран хĕвеланăç енче) Японин пĕр крейсерне путарнă. Çавăн пекех тата тепĕр крейсерпа подводнăй лодкăна атакăланă. Вĕсем çине снарядсем тĕл лекнĕ.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Официальнăй сведенисем тăрăх, японецсен Ява участокĕнче çÿрекен подводнăй лодки февралĕн 3-мĕшĕнче противникăн пĕр пысăк миноносецне путарнă.

Ĕнер ирхине Япони бомбардировщикĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Банка утравĕнчи аэродром çине (Суматрăн кăнтăр-хĕвелтухăç çыранĕ патĕнче) массăллăн вĕçсе пырса тапăннă.

Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Кăнтăр Китайра, Кантонран хĕвелтухăçнелле выртакан районра, çапăçусем Вейчжоу хули хĕрринче пыраççĕ. Япони войскисем çапăçнă тĕлте вĕсене артиллери те, авиаци те пулăшать.

(ТАСС, февралĕн 7-мĕш).

Англи правительстви Китая кивçен пани

ЛОНДОН, февралĕн 7-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи правительстви Китай правительствине çакăн çинчен пĕлтернĕ: Англия Китая вăрçă нушисем валли 50 миллион кĕрепенке стерлинг таран кивçен укçа пама хатĕр, тенĕ. Çавăн пекех тата Англи правительстви Китая боеприпассемпе çар снаряженийĕ те е кивçен, е аренда условийĕсемпе пама хатĕр.

Кроса 33 пин çын ытла хутшăннă

Профсоюз членĕсемпе комсомолецсем Хĕрлĕ Çар 24 çул тултарнă ятпа пулса иртекен кросĕн малтанхи эрни вĕçленчĕ. Çав вăхăтра кроса 33.729 çын ытла хутшăннă. Вăл шутра всевобуч подразделенийĕсен боецĕсем, физкультурниксем, учрежденисемпе предприятисенчи тата колхозсенчи комсомолецсемпе союзра тăман çамрăксем пулнă. 28.312 çын ГТО значокĕн нормине панă.

Кросс уйрăмăнах Чкаловски районра организованно иртет. Унта малтанхи эрнере кроса 3.284 çын хутшăннă. Вĕсенчен 2.975 çын ГТО значокĕн нормисене панă. Кроса ирттерес тĕлĕшпе, республикăри ытти районсемпе танлаштарсан, Елчĕк районĕ те малта пырать. Ку таранччен унта кроса 2.441 çын ытла хутшăннă. Çĕрпÿ районĕ те каях юлмасть. Кроса хутшăннă 1.707 çынран кунта 1.403 çын ГТО значокĕн нормисене панă. Çавăн пекех Хĕрлĕ Чутай, Куславкка, Вăрмар, Çĕмĕрле районĕсенче те пиншер ĕççыннисем кросăн малтанхи эрнинче йĕлтĕрсем çине тăчĕç.

Анчах та хăшпĕр районсенче йĕлтĕрçĕсен кросĕ начар пынине палăртмалла. Кувакино районĕнче кроса мĕнпурĕ те 232 çын кăна хутшăннă, вĕсенчен 225 çын норма панă. Пăрачкав районĕнче те çамрăксене, профсоюз членĕсене, всевобуч боецĕсене кроса хутшăнтарас тĕлĕшпе ĕç япăх тăрать. Сакăр кун хушшинче мĕнпурĕ те 475 çын кăна кросра пулнă. Советски, Шăхасан, Йĕпреç районĕсенче те кроса ертсе пырасси çителĕклĕ вырăнта тăмасть. Вĕсенче кроса 500—600-шер çын кăна хутшăннă.

Малтанхи эрнен итогĕсем тăрăх çакна калама пулать: хăшпĕр районсенче комсомолецсем сахал хутшăнаççĕ. Калинински районра 681 комсомолецă кросра 216 комсомолец кăна пулнă. Шăмăршă районĕнче унтан та начартарах, 677 комсомолецран кросăн малтанхи эрнинче 90 комсомолец кăна кроса хутшăннă.

Обязательствăсене срокчен татакансем

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Районри колхозниксем государство умĕнчи 1942 çулти парăмсене срокра тÿлесе пыраççĕ. Халĕ колхозниксем самообложени, культсбор укçисене васкасах тÿлеççĕ. Сăмахран, «Комсомолец» колхоз членĕсем И. Никитин, И. Осипов, Н. Тельцов, «Пионер» колхозри Ф. Руссаков, Л. Мурашкин юлташсем 1942 çулти культсбор, самообложени укçисене извещени илсенех тÿлесе татрĕç.

Çавнашкалах колхозниксем государство умĕнчи аш-какай тата ытти обязательствăсене те срокра татма тытăнчĕç. «Восход» колхоз 1942 çулти аш-какай обязательствине 80 процент пурнăçланă та ĕнтĕ.

А. КОСОЙКИН.

Чăваш искусствин вечерĕ

Пионерсен çуртĕнче февралĕн 8-мĕшĕнче чăваш искусствин вечерĕ пулса иртрĕ. Вечерта Д. Д. Данилов юлташ чăваш искусстви ÿссе пыни çинчен доклад туса пачĕ.

Ун хыççăн икĕ пайлă пысăк концерт пулчĕ. Концертра чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ чăваш халăх юррисене, хорпа юрлама Ф. Павлов, В. Воробьев, Т. Лисков, Г. Воробьев илемлетсе çырнăскерсене, тата чăваш совет композиторĕсен (Г. Лисков, А. Орлов-Шуçăм, Т. Лебедев т. ыт.) çĕнĕ юррисене юрласа пачĕ. Çавăн пекех ансамбль тата вырăсла икĕ юрă юрларĕ.

Пĕччен тухса юрлакансем те пулчĕç. М. А. Орлова 3 юрă юрларĕ. Вăл Т. Хирбюков çыракан «Нарспи» оперăран Нарспи юррине юрлани питĕ кăмăла кайрĕ.

О. Я. Агакова чăваш халăх юррисене икĕ юрă юрларĕ.

Ф. В. Нусинова Г. Воробьевăн «Кĕтÿç» ятлă юррине тата А. Орлов-Шуçăм çырнă «Савни» юрра пысăк ăсталăхпа юрласа пачĕ. Г. Воробьев çырнă сюитăна музучилище преподавателĕ Л. Феертаг рояльпе выляса пачĕ.

Чăваш халăх поэчĕ, орденоносец Н. И. Шелеби «Сталин» ятлă сăввине, поэт Н. Т. Васянка — «Тинĕс», С. А. Шавлы «Пирĕн Гварди» ятлă сăввисене вуласа пачĕç.

Вечера пынисем хушшинче халиччен чăваш юрри-сăввисене илтменнисем те пур. Вĕсем чăваш юррисем хăйсене кăмăла килни çинчен, чăваш сăввисен хăйсен уйрăмлăхĕ туйăнни çинчен тата чăваш ташшисен çепĕç ритмĕ çинчен калаççĕ (ансамбль юрланă май ташăсем те пулчĕç, анчах арçын ташши е хутăш ташă пулмарĕ).

Искусство вечерĕ тĕлне чăваш совет художникĕсен чи лайăх картинисен выставкине туни те нумайĕшне килĕшрĕ.

— Çак вечера килсе чăваш искусствипе паллашма тÿр килни мана питĕ савăнтарать,—терĕ пĕри вечер организаторне.

Н. В.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, экономика пайĕн — 0—88, çырусемпе рабсельхорсен пайĕн — 2—30, «Ĕçхĕрарăмĕ» журналăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин — 0—23.

ЧТ 371 Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграф промышлености при СНК ЧАССР, Заказ № 260. Ф. 6. 58 84 п. л.